1941
ФЕВРАЛЬ
27
КĔҪНЕРНИКУН
48 (5763) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАҪАЧĔ.

ССР Союзĕн 1мĕш созыври Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ

Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн 1941 çулти февралĕн 25-мĕшĕнче пулнă ларăвĕсем тата Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ çинчен

ИНФОРМАЦИЛЛĔ ПĔЛТЕРӲ

Февралĕн 25-мĕшĕнче, кăнтăрла 2 сехетре, ССР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра, Кремльре, Союз Совечĕн VIII Сессийĕ уҫăлнă.

Сессине Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев** уҫать.

Андреев юлташ: Сессине Союз Совечĕн Литва, Латви, Эстони, Молдави союзлă республикисенчен суйланă депутачĕсем тата çавăн пекех ытти союзлă республикăсенчи уйрăм округсенчен суйланă депутатсем килнĕ, тесе пĕлтерет. Андреев юлташ Союз Совечĕн Мандат Комисси докладне тума **А. С. Щербаков** депутата сăмах парать.

Щербаков юлташ Союз Совечĕн Мандат Комиссийĕ Союз Советне Молдаван СС Республикинчен, Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсенчен, Литва СС Республикинчен, Латви СС Республикинчен тата Эстони СС Республикинчен тата çавăн пекех ытти союзлă республикăсенчи уйрăм суйлав округсенчен суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕслени результачĕсем çинчен Мандат Комиссийĕ йышăннă постановление вуласа парать.

Депутат **В. Д. Никитин** сĕннипе, Союз Совечĕ Мандат Комиссийĕн доклачĕ тăрăх çакнашкал постановлени йышăнать:

«Союз Советне мĕнпур 117 суйлав округĕ тăрăх: Молдаван СС Республикинчен, Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсенчен, Литва СС Республикинчен, Латви СС Республикинчен, Эстони СС Республикинчен тата ытти союзлă республикăсенчи уйрăм суйлав округсенчен суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнасси çинчен Мандат Комиссийĕ докладне çирĕплетес».

Союз Совечĕн ячĕпе **Андреев** юлташ СССР Верховный Совечĕн çĕнĕ депутачĕсене, Литва, Латви, Эстони, Молдави тата ытти союзлă республикăсенчи халăхсем суйласа янă çынсене саламлать, пурте тăвăллăн алă çупса оваци тăваҫҫĕ.

Ун хыççăн Союз Совечĕ Сесси кун йĕркине çирĕплетесси çине куçать.

Андреев юлташ Союз Совечĕн VIII Сессийĕнче пăхса тухма сĕннĕ ыйтусене каласа тухать.

Депутат **Д. С. Коротченко** Союз Советĕнче пăхса тухма тăратнă ыйтусене Союз Совечĕн VIII Сессийĕн кун йĕркине кĕртме сĕнет.

Союз Совечĕ пурте пĕрсаслă пулса çакăн пек кун йĕрки çирĕплетет:

1. Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн 1941 çулти Государство бюджетне çирĕплетесси тата ССР Союзĕн 1939 çулти государство бюджетне пурнăҫа кĕртни çинчен отчета çирĕплетесси.

2. СССР Верховный Совет Президиумĕ Сессисем хушшинчи тапхăрта йышăннă тата СССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕ Указсене çирĕплетесси.

Депутат **М. Курбанов** сĕннипе Союз Совечĕ çапла йышăнать: ССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ çинчен тăвакан доклада Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕсенче итлес, Бюджет Комиссийĕсен содоклачĕсене, Государство бюджечĕ çинчен сӳтсе-явассине тата ăна çирĕплетессине палатăсем тăрăх уйрăмăн ирттерме йышăннă.

Национальноҫсен Совечĕн VIII Сессийĕн пĕрремĕш ларăвĕ çакăнпа хупăннă.

Каҫхине 7 сехетре Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулса иртнĕ.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ—Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев.**

СССР Верховный Совечĕн VIII Сессийĕн кун йĕркинчи пĕрремĕш ыйту тăрăх—ССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджечĕ çинчен тата ССР Союзĕн 1939 çулти Государство бюджетне мĕнле пурнăҫлани çинчен СССР Финанс Халăх Комиссарĕ **А. Г. Зверев** юлташ доклад туса панă.

Зверев юлташăн доклачĕ пĕтнĕ хыççăн Председатель пулса ертсе пыраканĕ **Андреев** юлташ Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрремĕш пĕрлехи ларăвĕ хупăннă, тесе пĕлтерет.

(ТАСС).

Партконференци ячĕпе çитĕнӳсем тăваҫҫĕ

ÇĔМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Пĕтĕм Союзри XVIII партконференци ячĕпе пуçланнă социализмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса уйрăм заводсемпе фабрикăсем, артельсемпе цехсем çĕнĕ çитĕнӳсем тăваҫҫĕ. Паянхи куна каткаличке, квас тăвакан заводсем, кондитерски фабрика тата Ширтов ячĕпе тăракан промысла артелĕ икĕ уйăхри плана ытлашшипех тултарнă.

Древкомбинатра 5-мĕш номерлĕ цех малта пырать. Цех коллективĕ (начальникĕ Ситулин юлташ) вăтамран кашни кунах плана 110 процентран кая мар тултарать. Уйрăм стахановецсем: Канавичев, Циглер, Веселкин, Марков юлташсем кашни кунах икшер норма тăваҫҫĕ. Вĕсем ĕнтĕ пурте 1-мĕш квартал планне иртерсе тултарнă.

«Труженик» заводра уйрăмăнах бондарнăй тата хăма çуракан цехсем паха тĕслĕхсем кăтартаҫҫĕ. Вĕсем февраль уйăх планне партконференци уҫăлнă кун тĕлне ытлашшипех тултарнă. Бондарнăй цех 1-мĕш квартал планне февралĕн 20-мĕшне 84 процент, хăма çуракан цех — 73 процент ытларах тултарнă.

Производствăри культурлăхшăн

КАНАШ. Вагонсем юсакан заводри рабочисемпе служащисем тата инженерно-технически работниксем партин XVIII конференци решенийĕсене вĕренессине практикăлă ĕçпе çыхăнтарса пыраҫҫĕ. Ремонтно-монтажнăй цех коллективĕ конференци решенийĕсемпе паллашнă хыççăнах заводри рабочисем патне чĕнсе каланине çырнă. Вăл çырура цех коллективĕ рабочисемпе инженерно-технически работниксене машинăсемпе станоксене тирпейлĕ пăхма, цехсенче культурăллă йĕрке тума чĕнеҫҫĕ.

Ремонтно-монтажнăй цех ытти цехсем хушшинче тирпейлĕхпе паллă. Унта станочниксем пурте тенĕ пекех тирпейлĕхмĕн тата тасалăхшăн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеҫҫĕ. Смена пĕтнĕ хыççăн яланах кашни рабочи хăйĕн станокне тĕплĕн тасатать, ĕç вырăнчи çӳп-çапсене шăлать.

Ытти цехсенче те культурлăхшăн кĕрешӳ сарăлса пырать. Теплоэлектроцентральте ĕçлекен комсомолкăсем Карсакова, Ильина юлташсем электричество оборудованисене лайăх пăхса усрама шефа илнĕ. Рессорсемпе пружинăсем тăвакан цехри станочницăсем Серзина тата Яковлева юлташсем хăйсем ĕçлекен преса тирпейлĕ тытса усраҫҫĕ.

М. ТИТОВ.

СОЮЗ СОВЕТĔНЧЕ

Февралĕн 25-мĕшĕнче Кремльре Союз Совечĕн Саккăрмĕш Сессийĕ уҫăлнă. Лару пуçланиччен чылай малтан Кремльри Пысăк Дворец депутатсемпе хăнасем пуçтарăнма пуçланă. 14 сехет. Союз Совечĕн депутачĕсем Верховный Советăн заседанисен залĕнче вырăнсене йышăнаҫҫĕ. Вĕсем хушшинче—Литва СС Республикинчен, Латви СС Республикинчен, Эстони СС Республикинчен, Молдаван СС Республикинчен, Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсенчен суйланă депутатсем.

Сессире дипломати корпусĕн чиновникем те пур. Совет журналисчĕсемпе ютçĕршывсенчи пичет представителĕсен ложисем те тулса ларнă. Анлă та пысăк балкона хăнасем—Мускаври заводсемпе фабрикăсен, Мускав гарнизонĕнчи чăссен, столицăри интеллигенци представителĕсем йышăннă.

Председателĕн сĕтелĕ умне Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев,** Союз Совет Председателĕн Заместительĕсем **Т. Д. Лысенко** тата **У. Юсупов** депутатсем тухаҫҫĕ, ложăсенче—СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, СССР Совнаркомĕн Председателĕпе **В. М. Молотов** юлташпа пĕрле правительство членĕсем вырнаҫаҫҫĕ. Вĕсене тăвăллă оваци туса кĕтсе илеҫҫĕ.

Сессине Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев** уҫать. Вăл Сессине Литва СС Республикинчен, Латви СС Республикинчен, Эстони СС Республикинчен, Молдаван СС Республикинчен, Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсенчен Союз Советне суйланă депутатсем, çавăн пекех ытти союзлă республикăсенчен уйрăм округсем тăрăх суйланă депутатсем килни çинчен пĕлтерет. Союз Совечĕн Мандат Комиссийĕ вĕсен полномочине тĕрĕслесе тухнă, вăл хăйĕн ĕçĕн результачĕсем çинчен каласа парать.

Доклад тума Союз Совечĕн Мандат Комиссийĕн Председателĕ депутат **А. С. Щербаков** сăмах илет.

Депутат **А. С. Щербаков** çакна аса илтерет: СССР Верховный Совечĕн VII Сессийĕ Молдаван Советлă Социализмлă Республики тăвасси çинчен, Буковинăн çурçĕр пайне тата Бессарабин Хотин, Аккерман тата Измаил уезчĕсене Украина ССР составне кĕртесси çинчен, Литва, Латви тата Эстони Советлă Социализмлă Республикисене Советлă Социализмлă Республикăсен Союзне пĕртан правăллă Советлă Социализмлă Республикăсем туса илесси çинчен Закон йышăнчĕ. СССР Конституцийĕн 34-мĕшпе 35-мĕш статьисем тăрăх, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Советлă çĕнĕ Республикăсемпе облаҫсенчен Верховный Совет депутачĕсен суйлавĕсене ирттерме йышăнчĕ. Çав республикăсемпе облаҫсенчи ĕççыннисем хăйсен представителĕсене государствăн аслă органĕнĕсене ирĕклĕн тата демократиллĕн суйлама чи пирвайхи хут май илнĕ. Суйлавсене пурне те тивĕç, тӳрех тата пĕртан суйлав правипе вăрттăн сасăласа иртернĕ. 18 çула çитнĕ граждансем пурте, расăпа национальноçне, мĕнле тĕн тытнине, вĕреннине, пĕр вырăнта пурăннипе пурăнманнине, мĕнле сийпек тухнине, пурлăх тата иртнĕ вăхăтри ĕçĕсем мĕнлине пăхмасăрах, суйлавсене хутшăннă. Хĕрарăмсем суйламалли тата суйланмалли правăпа арçынсемпе пĕртанах усă курнă. Çавăн пекех СССР Верховный Совечĕн Союз Советне ытти союзлă республикăсенчен уйрăм суйлав округĕсем тăрăх та тухса ӳкнĕ депутатсем вырăнне çĕнĕ депутатсем суйланă. Суйлавсене 117 суйлав округĕ тăрăх ирттернĕ. Союз Совечĕн суйлавĕсене суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчи 98,69 проценчĕ хутшăннă. Коммунистсемпе беспартийнăйсен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă çĕре хутшăннă суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 98,93 проценчĕ сасăланă.

Депутат Щербаков çакăн çинчен калать: суйлавсем ĕççыннисен политикăллă активлăхĕ калама çук çӳлте тăнипе иртнĕ. Ун çинчен çак цифрăсем те кăтартса параҫҫĕ: Молдаван СС Республики тăрăх Союз Советне депутатсем суйланă çĕре суйлавçăсенчен 99,56 проценчĕ хутшăннă, коммунистсемпе беспартийнăйсен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă çĕре хутшăннă суйлавçăсен пĕтĕм хисепĕнчен 99,51 проценчĕ сасăланă; Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсем тăрăх та çавнашкал цифрăсемех курăнаҫҫĕ — 99,56 процент тата 98,81 процент; Литва СС Республики тăрăх — 91,03 процент тата 95,5 процент; Латви СС Республики тăрăх — 98,12 процент тата 98,49 процент; Эстони СС Республики тăрăх — 97,4 процент тата 97,01 процент.

Елĕкхи вăхăтра буржуазипе помещиксен влаçĕ айĕнче тăнă Литвара, Латвире тата Бессарабире суйлавсенче ун пек результатсем пулман тата пулма та пултарайман. 1936 çулта Литва сеймĕн суйлавĕсене суйлавçăсенчен мĕнпурĕ те 35—38 процент кăна хутшăннă, Эстони Государстви думин депутачĕсем сасăсен тăватă пайĕнчен пĕр пайне кăна, нумай-нумай пулсан çуррине кăна илнĕ. Совет влаçĕ кăна ĕççыннисене пурне те активлă политикăллă пурнăҫа хутшăнтарма пултарчĕ.

Ытти союзлă республикăсенчен уйрăм суйлав округĕсем тăрăх Союз Советне депутатсем суйласси те политикăллă пысăк активлăхпа иртрĕ. 117 суйлав округĕнче пуринче те Союз Советне депутатсене коммунистсемпе беспартийнăйсен блок кандидачĕсене суйланă.

Депутат Щербаков çапла пĕлтерет: Мандат Комиссийĕ, СССР Конституцийĕн 50-мĕш статьи тăрăх, мĕнпур суйлав округĕсем тăрăх кашни депутат тĕлĕппе суйлав документĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухса çакна палăртрĕ: мĕнпур 117 суйлав округĕ тăрăх та Союз Советне депутатсем суйлассине пĕтĕмĕшпех СССР Конституцийĕ тата «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» тăрăх ирттернĕ. Суйлавсене мĕнле те пулин суйлав округĕ тăрăх çĕнĕрен ирттермелли туни çук.

— Суйлавсем, — тет депутат Щербаков, — ССР Союзĕнчи халăхсен Сталинла туслăхĕ çĕнĕ çĕнтерӳ туни не кăтартса параҫҫĕ. Халĕ ĕнтĕ пирĕн нумай нацилле социализмлă государствăна Литва, Латви, Эстони, Бессараби тата Çурçĕр Буковина халăхĕсем те кĕреҫҫĕ. Вĕсен представителĕсем Совет Союзĕн пурнăҫĕнчи питех те кирлĕ ыйтусене сӳтсе-явнă çĕре хутшăнаҫҫĕ.

Депутат Щербаков Союз Советне союзлă çĕнĕ республикăсемпе облаҫсенчен тата ытти союзлă республикăсенчен уйрăм суйлав округĕсем тăрăх суйланă депутатсен составĕ çинчен каласа кăтартать. Депутатсен шутĕнче рабочисем 44, хресченсем 31, служащисем 42. Аслă шкултан вĕренсе тухнисем 52 депутат, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнисем 31 депутат шутланать. Депутатсенчен хĕрарăмсем — 6 çын. Çул тĕлĕшĕнчен илсен çапла: 26 çултан пуçласа 40 çула çитнисем 76 депутат тата 40 çултан иртнисем—41.

— Союзлă çĕнĕ республикăсенчи халăхсем, — тесе вĕçлет хăйĕн докладне депутат Щербаков, — коммунистсемпе беспартийнăйсен блок кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăланипе Ленин—Сталин партине, Совет правительствине вĕçĕмсĕр шанса тăнине, социализмлă тăван çĕршыва, çĕçыннисен çулпуçне тата учительне—Сталин юлташа пĕтĕм чĕререн юратнине татах та татах тепĕр хут кăтартса пачĕç.

Депутатсемпе хăнасем çак сăмахсене нумайччен алă çупса ответлеҫҫĕ.

Депутат **В. Д. Никитин** панă сĕнӳ тăрăх Союз Совечĕ Молдаван СС Республикинчи, Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсенчи, Литва СС Республикинчи, Латви СС Республикинчи, Эстони СС Республикинчи мĕнпур суйлав округĕсем тăрăх Союз Советне депутатсем суйласа ытти союзлă республикăсенчи уйрăм суйлав округĕсем тăрăх Союз Советне депутатсене полномочийĕсене тĕрĕслесе тухнă, вăл ĕçĕн результачĕсем çинчен Мандат Комиссийĕ докладне итлемелле пулать.

Депутат **М. А. Бурмистенко** Национальноҫсен Совечĕн Мандат Комиссийĕн докладне тума сăмах илет.

— СССР Конституцийĕн 34-мĕшпе 35-мĕш статьисем тăрăх, — тет депутат Бурмистенко, — ССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Молдаван СС Республикинчен, Украина СС Республикин Черновицы тата Измаил облаҫĕсенчен, Литва, Латви тата Эстони Союзлă Советлă Социализмлă Республикисенчен СССР Верховный Советне депутатсем суйлас тĕлĕшпе суйлавсем ирттерме йышăнчĕ. Çĕнĕрен туса йĕркеленĕ союзлă республикăсенче тата облассенче 1941 çулти январĕн 12-мĕшĕнче суйлавсем ирттернĕ. Совет влаçĕ туса хурса Сталинла Конституцине ĕçе кĕртнĕ хыççăн кăна çак республикăсемпе облаҫсен ĕççыннийĕсем государство влаçĕн верховнăй органĕсене—чăн-чăн халăх представителĕсене—пурне те тивĕç, тӳрĕ тата пĕртан суйлав прави тăрăх вăрттăн сасăласа суйлама май илчĕç.

Çакăнпа пĕрлех, юлашки уйăхсенче, «СССР Верховный Советне суйламалли Положенин» 110-мĕш статьи тăрăх, союзлă ытти республикăсенчи уйрăм суйлав округĕсем тăрăх депутатран тухса ӳкнĕ çынсем вырăнне çĕнĕ депутатсем суйланă. СССР Верховный Совечĕн Национальноҫсен Советне 124 суйлав округĕ тăрăх депутатсем суйланă. Пур округсем тăрăх та депутатсене коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕн кандидачĕсене суйланă.

Депутат Бурмистенко депутатăн çак заявленисене депутатсемпе хăнасем нумайччен алă çупса саламлаҫҫĕ.

Депутат Бурмистенко Национальноҫсен Советне союзлă çĕнĕ республикăсемпе облаҫсенче суйлавсем организованно, политикăллă пысăк активлăхпа иртнĕ. Сасăланин результачĕсем çакна кăтартса параҫҫĕ: кĕске срок хушшинчех çак республикăсемпе облаҫсенчи мĕнпур ĕççыннисем Совет влаçĕн ялавĕ айне тăрса пĕрлешрĕç.

Малалла депутат Бурмистенко Национальноҫсен Совечĕн çĕнĕрен суйланă депутачĕсен составĕ çинчен каланă цифрăсене илсе кăтартать. Молдаван СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче: 6 рабочи, 9 хресчен, 10 служащи; Литва СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче: 8 рабочи, 6 хресчен, 11 служащи; Латви СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче: 12 рабочи, 5 хресчен, 8 служащи: Эстони СС Республикинчен — 10 рабочи, 4 хресчен, 11 служащи. Суйланă депутатсен нацилле составĕ халăхсен сталинла туслăхне кăтартса тăрать. Национальноҫсен Советне Молдаван СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче — 17 молдаван, 4 вырăс, 3 украинец, 1 цыган. Литва СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче — 22 литовец, 2 белорусс 1 еврей. Латви СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче — 23 латыш, 1 вырăс, 1 поляк. Эстони СС Республикинчен суйланă депутатсем хушшинче — 23 эстонец, 2 вырăс.

Нумаях та пулмасть-ха, Литвара, Латвире, Эстонире, Бессарабире тата Çурçĕр Буковинăра буржуазипе помещиксем пуçпулса тăнă вăхăтра, — тет депутат Бурмистенко, — хĕрарăмсем общественăн тулли правăллă членĕсем пулман тата пулма та пултарайман. Халĕ вĕсем — советлă социализмлă общественăн тулли правăллă членĕсем! Çакă вăл акă мĕнрен ҫӳçăн курăнать: Национальноҫсен Совечĕн çĕнĕрен суйланă депутачĕсем хушшинче — 22 хĕрарăм.

Мĕнчухлĕ вĕренни енчен илсе пăхсан, депутатсен составĕ çакăн пек: аслă шкултан вĕренсе тухнисем — 32 çын, вăтам шкултан вĕренсе тухнисем — 51 çын, пуçламăш шкулта вĕреннисем—42 çын, 18 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ депутатсем — 7 çын, 26 çултан пуçласа 40 çула çитнисем—77 депутат, 40 çултан иртнисем — 40 депутат. Национальноҫсен Совечĕн депутачĕсем хушшинче Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн членĕсем тата беспартийнăйсем пур.

Сессири çынсем тăвăллăн алă çупнă май депутат Бурмистенко çапла калать:

— Коммунистсемпе беспартийнăйсен блокĕн кандидачĕсемшĕн пĕр шухăшлă пулса сасăланипе союзлă çĕнĕ республикăсемпе çĕнĕ облаҫсенчи ĕççыннисем хăйсем большевиксен партине, Ленин — Сталин ĕçне, Совет Правительствине, ĕççыннисен çулпуçне тата учительне — Сталин юлташа вĕçĕхĕррисĕр юратнине тата пĕтĕм чĕререн парăннине татах та тепĕр хут кăтарса пачĕç!

Депутат Бурмистенко çапла пĕлтерет: Национальноҫсен Совечĕн Мандат Комиссийĕ, кашни депутат пирки тăратнă суйлав документĕсемпе материалĕсене тĕрĕслесе тухса, çакна палăртнă: Национальноҫсен Советне депутатсем суйлас тĕлĕппе пулнă суйлавсене мĕнпур 124 округ тăрăх та тĕрĕс, пĕтĕмĕшпех СССР Конституцийĕпе «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» тăрăх ирттернĕ.

Депутат **А. Алиев** сĕннипе Национальноҫсен Совечĕ Мандат Комиссийĕн докладне çирĕплетесси çинчен тата Молдаван СС Республикинчен, Украина СС Республикин Измаил тата Черновицы облаҫĕсенчен, Литва СС Республикинчен, Латви СС Республикинчен, Эстони СС Республикинчен мĕнпур суйлав округĕсем тăрăх тата союзлă ытти республикăсенчи уйрăм суйлав округĕсенчен Национальноҫсен Советне суйланă депутатсен полномочийĕсене тĕрĕс тесе йышăнасси çинчен пĕрсаслă пулса постановлени йышăнать.

Председатель пулса ертсе пыраканĕ депутат **Шверник** Национальноҫсен Совечĕн çĕнĕ депутачĕсене — Литвари, Латвири, Эстонири, Молдавири тата союзлă ытти республикăсенчи уйрăм суйлав округĕсенчи халăхсем суйласа янă çынсене Национальноҫсен Совечĕн ячĕпе саламлать. Шверник депутатăн çак сăмахĕсем хыççăн, тăвăллă халăхсен СССР Верховный Советĕнчи посланникĕсене чысласа тăвăллă оваци тăваҫҫĕ.

Унтан Председатель пулса ертсе пыраканĕ çапла пĕлтерет: Национальноҫсен Совечĕн Саккăрмĕш Сессинче сӳтсе-явма çакăн пек ыйтусем тăратнă:

1. ССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджетне çирĕплетесси тата ССР Союзĕн 1939 çулти Государство бюджетне пурнăҫа кĕртни çинчен отчета çирĕплетесси.

2. СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Сессисем хушшинчи тапхăрта йышăннă тата СССР Верховный Совечĕ çирĕплетме тивĕçлĕ Указсене çирĕплетесси.

Депутат **А. Д. Менбариев** сĕнӳ паннипе Сессире сӳтсе-явма тăратнă ыйтусене Национальноҫсен Совечĕн Саккăрмĕш Сессийĕн кун йĕркине кĕртеҫҫĕ.

Депутат **Д. Е. Отян** сĕнӳ паннипе ССР Союзĕн Государство бюджечĕ çинчен тăвакан доклада Национальноҫсен Совечĕпе Союз Совечĕн пĕрлехи ларăвĕсенче итлеме пĕрсаслă пулса решени йышăнаҫҫĕ. Бюджет Комиссийĕн содокладне, ССР Союзĕн Государство бюджетне сӳтсе-явас тата ăна çирĕплетес ĕçе палатăсен уйрăм ларăвĕсенче ирттерме пĕрсаслă пулса решени йышăнаҫҫĕ. Кун йĕркинче иккĕмĕш пункта та палатăсен уйрăм ларăвĕсенче сӳтсе-явма йышăннă.

(ТАСС).

СССР СОЮЗĔН 1-мĕш СОЗЫВРИ ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН VIII СЕССИЙĔ

Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ

Февралĕн 25-мĕшĕнче каҫхине Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ пулнă.

19 сехет. Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн депутачĕсем СССР Верховный Совечĕн ларăвĕсем пулакан залра хăйсен вырăнĕсене йышăнаҫҫĕ. Хăнасем хушшинче, кăнтăрлахи пекех, промышленноҫăн, транспортăн, Хĕрлĕ Çăран чаплă сыннисем, ученăйсем, инженерно-технически работниксем, литературăпа искусство деятелĕсем. Дипломатиллĕ корпус чинĕсем пур. Совет прессипе ютҫĕршывсен прессин ложисем çинче пĕр пушă вырăн та çук.

Председатель сĕтелĕ хушшинче — Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев**, Национальноҫсен Совечĕн Председателĕ депутат **Н. М. Шверник**, икĕ палата председателĕсен заместителĕсем — **Т. Д. Лысенко, У. Юсупов, Ч. А. Асланова** тата **М. В. Кулагин** депутатсем. Ложăсем çинче— **И. В. Сталин, В. М. Молотов, К. Е. Ворошилов, М. И. Калинин, Л. М. Каганович, А. И. Микоян, А. А. Жданов, Н. С. Хрущев, Л. П. Берия, Н. А. Вознесенский, Г. М. Маленков, С. К. Тимошенко, М. Ф. Шкирятов, Н. А. Булганин, Н. Г. Кузнецов, Р. С. Землячка, С. М. Буденный, К. И. Николаева, И. Т. Тевосян, А. Г. Зверев, А. И. Ефремов** юлташсем тата СССР Верховный Совет Президиумĕн ытти членĕсемпе Правительство членĕсем.

Сталин юлташ, партипе правительство руководителĕсем пырса кĕрсен тăвăллă овации тăваççĕ. Депутатсемпе хăнасем, ура çине тăрса, аслă Сталина тата унăн соратникĕсене пĕтĕм чĕререн хавхаланса саламлаççĕ. Овации темиҫе минута хушши кĕрлесе тăрать. Залăн пур кĕтесĕсенче те Сталин юлташа чысласа ССР Союзĕнчи халăхсен чĕлхисемпе саламласа каланă сăмахсем янăра-янăра илтĕнеҫҫĕ.

СССР Верховный Совет палатисен пĕрлехи ларăвне Союз Совечĕн Председателĕ депутат **А. А. Андреев** уçать. Кун йĕркинче — ССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджетне çирĕплетесси тата ССР Союзĕн 1939 çулти Государство бюджетне пурнăҫа кĕртни çинчен отчета çирĕплетесси.

Çак ыйтупа СССР Финанс Халăх Комиссарĕ **А. Г. Зверев** юлташ доклад тăвать. Зверев юлташа алă çупса кĕтсе илеççĕ.

Зверев юлташ çапла хăтартса парать: ССР Союзĕн 1941 çулти Государство бюджетне, Сессине çирĕплетме тăратнă бюджета, пĕтĕмĕшпех халăх хуçалăхне вăйлатмалли план тăрăх тунă, бюджет задачи — Совет Союзĕн малашнехи хуçалăхне, культурăллă тата оборонăллă строительствине кирлĕ средствăсем парасси пулса тăрать.

Докладчик социализмлă промышленность, транспорт тата ялхуçалăхĕ ҫинчен çинчен калакан цифрăсене илсе кăтартать.

— Совет Союзĕн хуçалăхпа çар хăвачĕ, — тет вăл, — ӳссе çирĕпленчĕ. Совет Союзĕн чиккисем сарăлчĕç. Пирĕн социализмлă государство социализмлă 16 республикăн хăватлă Союзĕ пулса тăчĕ. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пыракан совет халăхĕ коммунизм патнелле шанчăклăн пырать. Вăл хăйĕн пĕтĕм çитĕнĕвĕсемшĕн геннилле учителе тата халăхсен çулпуçне — хамăран аслă Сталина тав тума тивĕçлĕ!

Çак сăмахсене каласан залра хăватлă овации тăваççĕ. Пурте ура çине тăраççĕ. Социализмăн пĕтĕм тĕнчилех историллĕ çĕнтерĕвĕсен организаторне тата вăл çĕнтерӳсене хавхалантарса пыракана аланă саламлă сăмахсем нумайччен янăра-янăра илтĕнеҫҫĕ. ССР Союзĕнчи нумай халăхсен чĕлхипе кăшкăрса аланă сăмахсем илтĕнеҫҫĕ:

— Сывă пултăр Сталин юлташ!

— Аслă Сталина — урра!

Докладчик çапла калать: 1940 çултипе танлаштарсан, ССР Союзĕн 1941 çултри Государство бюджечĕн дохочĕсем 38 миллиард тенкĕ — 21,4 процент чухлĕ ӳсеççĕ. Çак сăмахсене депутатсем пĕтĕм кăмăлтан ырласа илтеççĕ.

Бюджетăн доход пайне кăтартса парса, Зверев юлташ çакна паллă тăвать: бюджета ăнăçлăн пурнăҫа кĕртесси партин Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решенисене, халăх хуçалăхне малалла вăйлатса пымалли конкретлă программăна палăртса панă тата промышленноҫпа транспорт ĕçĕнчи тĕп ҫитменлĕхсене пĕтермелли çулйĕре кăтартса панă партконференци йышăннă решенисене пурнăҫа кĕртес ĕçпе нимĕн уйăрăлми сыхăнса тăрать.

Докладчик бюджетăн доход пайĕ çине куçать. Вăл социализм çĕршывĕ пĕрмаях тата хăвăрт ӳссе пынине кăтартса паракан цифрăсене вуласа парать. Халăх хуçалăхĕнче, халăха вĕрентес, сывлăха сыхлас ĕçре тăвакан расходсем чылаях ӳсеççĕ. Çак чаплă цифрăсене депутатсемпе хăнасем калама çук пысăк тимлĕхпе, пысăк савăнăçлă туйăмпа итлеççĕ. Çакăн пек гигантла пысăк та анлă ĕçсене çĕнтерӳ тунă социализм çĕршывĕ кăна пурнăҫа кĕртме вăй çитерет.

Малалла Зверев юлташ çапла калать: кучухнехи тĕнчери йывăр обстановкăна тата çĕршывăн оборонăллă хăватне татах та ытларах çирĕплетме кирлине шута илсе, Совет Правительстви 1941 çулта оборона нушисем валли 70.900 миллион тенкĕ пама сĕнет. Çак сăмахсене каласан залра тăвăллă овации кĕрлесе каять. Пурте ура çине тăраççĕ. Нумайччен чăрăнмасăр алă супнинче, Сталин юлташа чысласа кăшкăрса каланă саламлă сăмахсенче çулăмлă совет патриотизмĕн пурне те çĕнтерсе пыракан вăйĕ, 193 миллионлă совет халăхĕ хăйĕн юратнă социализмлă тăван çĕршывĕн оборонине ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетсе пырас кăмăлĕ хăватлăн янăраса тăрать.

Зверев юлташăн докладчĕ пĕтнĕ хыççăн, Председатель пулса ертсе пыраканнĕ депутат **А. А. Андреев** Союз Совечĕпе Национальноҫсен Совечĕн пĕрлехи ларăвĕ хупăннă тесе пĕлтерет.

(ТАСС).

С. В. Эльгер литературăра ĕçлеме пуçлани 20 çул тултарать

1941 çулти мартăн 5-мĕшĕнче чăваш халăх поэчĕ С. В. Эльгер литературăра ĕçлеме пуçлани 20 çул тултарать.

Çав майпа, чăваш совет писателĕсен Союзĕн правленийĕ чылай ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Пур хаçатсенче те поэтăн пурнăҫĕпе творчести çинчен статьясем пулаççĕ. Мартăн 5-мĕшĕнче хулара литература вечерĕ пулать, унта писательсен Союзĕн председателĕ А. Эсхель юлташ поэтăн творчестви çинчен доклад тăвать. Çав кунах С. В. Эльгер çинчен радиопередача туса ирттереççĕ.

Халĕ писательсен Союзĕ поэтăн юбилейне ирттерме тимлĕн хатĕрленет.

Л. А.

ХРОНИКА

Оборона Халăх Комиссарĕ Совет Союзĕн Маршалĕ Тимошенко юлташпа Хĕрлĕ Çăран Генеральнăй Штабĕн Начальникĕ Жуков юлташ патне, Хĕрлĕ Çар XXIII çул тултарнă май чылай çĕршывсенчи Главнокомандующисемпе Генеральнăй Штабсен начальниксен ячĕпе сывлăх сунса янă саламсем пынă. Сывлăх сунса саламсем пама Германин тинĕс-çар атташи пĕрремĕш рангри капитан г-н фон Баумбах, Италин çар тата сывлăш-çар атташи полковник г-н Виель, Китай республикин çар атташин обязанноҫĕсене туса тăракан подполковник г-н Чжан Пей-чжай тата Германи сывлăш-çар атташин помощникĕ оберштабсинженер г-н Вундерлих СССР Оборона Халăх Комиссариачĕн Тулашри Сношенисен Отделне пынă.

Маршал Чан Кай-ши, Китай республикин Мускаври посолĕ г-н Шао Лицзы, Англин çар атташи полковник Грир, Англин сывлăш-çар атташи полковник Хеллауэлл, Югославин çар тата сывлăш-çар атташи полковник Поповић, Болгарин çар атташи майор Кубадинов, США çар атташи майор Эйтон, Турцин çар атташи подполковник Тюркмен, Финляндин çар атташи полковник Лютинен, Швецин çар атташи майор Флодстрем тата Швецин сывлăш-çар атташи капитан Веннерстрем саламлă çырусем янă.

Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ адмирал Кузнецов юлташпа Главнăй Тинĕс Штабĕн Начальникĕ адмирал Галлер юлташ патне те Германин тинĕс-çар атташи пĕрремĕш рангри капитан фон Баумбах, Италин çар тата тинĕс-çар атташи полковник Виель тата Японин тинĕс-çар атташи пĕрремĕш рангри капитан Ямагути, Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн Тулашри Сношенисен Отделне пырса, çавнашкалах сывлăх сунса саламсем каланă. Кунсăр пуçне, Англин тинĕс-çар атташи капитан Кленчи, Югославин çар тата тинĕс-çар атташи полковник Попович, США çар атташи майор Эйтон тата унăн помощникĕ Мичела саламлă çырусем янă.

1941 çулта аслă шкулсене вĕренме илесси

Февралĕн 24-мĕшĕнче Аслă шкул ĕçĕсен СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Комитечĕ 1941 çулта аслă шкулсене вĕренме илмелли правилăсене çирĕплетнĕ.

Пурĕ 178 пин çынна вĕренме илме палăртнă. Вĕренме илмелли экзаменсене августăн 1-мĕшпе 20-мĕш хушшинче ирттермелле тунă, заочно вĕренмелли аслă шкулсемпе отделенисене илнĕ чух — августăн 1-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 20-мĕшчен.

Аслă шкулсене вĕренме 17 çула çитнисенчен пуçласа 35 çула çитнисем таран илеççĕ, заочно вĕренмелли аслă шкулсемпе отделенисене илнĕ чух миҫе çула çитнине пăхса тăмаççĕ. Вĕренме кĕрекенсен аслă шкул специальноҫне кура экзамен тытмалла пулать. Вунă çул вĕренмелли шкултан отличник аттестачĕпе вĕренсе тухнисене, çавăн пекех 1941 çулта рабфакран, вăтам шкултан пĕтĕм дисциплинăсем тăрăх (черченисĕр, рисованисĕр тата физкультурăсăр пуçне) «отлично» отметкăпа вĕренсе тухнисене аслă шкулсене экзаменсăрах илеççĕ. Техникумран вĕренсе тухнă çынсене, вĕсем виҫĕ çул хушши производствăра ĕçленĕ пулсан кăна вĕренме илмелли экзамена кĕртеççĕ. Заочно тата каҫхине вĕренмелли аслă шкулсене кĕрекенсенчен, çавăн пекех тата техникумран вĕренсе тухнă хыççăн виҫĕ çул е ытларах вăхăт хушши Хĕрлĕ Çарта действительнăй çар службинче пулнă çынсенчен çав стажа ыйтмаççĕ.

Аслă шкулсене вĕренме илме ыйтса çырнă заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа июлĕн 31-мĕшчен йышăнаççĕ. Заочнăй институтсемпе отделенисене кĕме паракан заявленисене июнĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа августăн 31-мĕшчен йышăнаççĕ. Аслă шкул директорĕ вĕренме кĕрекен çынна экзамена кĕме ирĕк панипе паманни çинчен ăна заявленă илнĕ хыççăн 5 кун хушшинче пĕлтерме тивĕçлĕ.

Пушă вырăнсем пур чухне аслă шкулсен директорĕсем урăх аслă шкулсенче экзамен панă, анчах вырăн пулманнипе йышăнман çынсене студентсен шутне илме пултараççĕ. Урăх аслă шкултан куçса пыракансене пĕрремĕш курса экзаменсĕр илме юрамасть.

(ТАСС).

Осоавиахимовецсен командăллă ăмăртăвĕсем

Февралĕн 25-мĕшĕнче Осоавиахимăн Пĕтĕм Союзри командăллă-йĕлтĕрлĕ ăмăртăвĕсем пуçланчĕç. Çавна май пирĕн редакци Осоавиахимăн районри совечĕн председателĕсене чĕнсе ăмăртăван пĕрремĕш кунĕ мĕнле иртни çинчен ыйтса пĕлчĕ.

* * *

СЕНТЕР, февралĕн 26-мĕш. (Телефонпа). Осоавиахимовецсен командăллă ăмăртăвне 150 çынна яхăн хутшăнмалла. Вĕсем пурте тенĕ пекех III—IV-мĕш категорисемпе хутшăнаççĕ.

Ăмăрту результачĕсен пахалăхĕ командăсене малтан лайăх хатĕрлесе пынинчен килет. Çавăнпа та халь пирĕн командăсем кашни кунах тренировкăсенче пулаççĕ. Çитес вырсарникун хăшпĕр командăсем старта тухаççĕ.

КУКЕҪ, февралĕн 26-мĕш. (Телефонпа). Пĕтĕм Союзри командăллă ăмăртăва хутшăнма Осоавиахим членĕсенчен III-мĕш категорипе 14 команда, IV-мĕш категорипе 7 команда тунă, пурĕ 250 çын хутшăнать.

Енер Абашри вăтам шкулти Осоавиахим членĕсем ăмăрту туса ирттерчĕç. Калас пулать, çанталăк питĕ ăшă тăнă пирки ăмăрту ăнăçлах иртмерĕ, участниксем те сахал пулчĕç, пурĕ те 20 çын çеç.

Противогазсем, ăмăртусем вăхăтĕнче кирлĕ ытти япаласем çителĕклĕ.

Колхозсенчи осоавиахимовецсем те ăмăртăва тимлĕн хатĕрленеççĕ. Карачура колхозĕнчи Осоавиахим членĕсем вăл ăмăртăва ирттернĕ те ĕнтĕ. Район центрĕнчи допризывниксем те ăмăртăва хутшăнчĕç.

„Индустрия социализма“ ятлă карттăна туса пĕтернĕ

ЛЕНИНГРАД. «Русские самоцветы» тресчĕн 2-мĕш номерлĕ завочĕ февралĕн 20-мĕшĕнче «Индустрия социализма» ятлă пысăк та илемлĕ карттăна туса пĕтернĕ. Карттă çине пирĕн тăван çĕршывăн государствăн çĕнĕ чиккисене ӳкернĕ, вĕсене яшмăпа, бухаски лазуритпа тата орлецпа кăтартнă. Карело-Финн, Литва, Латви, Эстони, Молдаван СС Республикисен столицисене—рубин çăлтăрсемпе кăтартнă.

ЮТҪĔРШЫВСЕНЧЕ

Африкăри тата Албанири фронтсенче

(Февралĕн 18-мĕшпе 25-мĕш хушшинчи вăрçă ĕçĕсене пăхса тухни)

Иртнĕ эрне хушшинче Англи войскисен активлă операцийĕсен центрĕ Ливирен Италин Хĕвелтухăç Африкине—Абиссиние, Эритрейăна тата пуринчен ытларах Итали Сомалине куçнă. Бенгазине илнĕ хыççăн, англичансем Киренаикăн çурçĕр пайне йышăннă, унпа икĕ уйăх хушши пит хаяр çапăçусем пынă. Çак вăхăтра Англи Египетпа Ливи çыранĕ тăрăх—Мерса-Матрухран пуçласа Эль-Агейла патне çити наступлени туса пынă мотомеханизированнăй войскисем иртсе тухма йывăр вырăнсемпе пин километр хушши çул тунă.

Бенгазине илнипе англичансем стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăракан тинĕс тата сывлăш-çар бази туяннă. Англичири хаçатсем кăтартса панă тăрăх, Бенгази оборудовани енчен лайăх тунă тинĕс порчĕ шутланать, унта гинĕс çинчи пĕчĕкрех вăйсен базине гума пулать. Хула тулашĕнче икĕ аэродром пур, вĕсем чылай пысăк. Кунсăр пуçне, çав пункт автомобиль çулĕсен узелĕ пулса тăрать: вăл çулсенчен пĕри тинĕс хĕррипе Триполине, тепри—Аджедабия урлă Куфра оазисĕсем патнелле каять. Бенгазине туртса илнĕ хыççăн Англин мотомехчăсĕсем тинĕс хĕрринчи çул тăрăх хĕвеланăç еннелле куçса пынă, вĕсем, Эль-Агейлăна туртса илнĕ хыççăн, Сирт пушхирне пырса кĕнĕ. Хальхи вăхăтра Ливири фронтăн çав участокĕнче разведка тăвакан чăссем кăна тĕл пулса çапăçкаласçĕ. Паллах, Англи войскисен кăштах канмалла, вĕсен çĕнĕ подкреплениссем илмелле, çимĕссем, боеприпассем, уйрăмăнах горючи тăратмалли çĕнĕ базăсем организацилемелле Çакна Германин Италири сывлăш корпусĕн командованийĕ шута илет. Германи авиацийĕн соединенийĕсем юлашки вăхăтра Бенгази тата Киренаикăри портсем çине, çавăн пекех Бенгазирен кăнтăр тата кăнтăр-хĕвелтухăç енче Англин пĕр çĕре пухăнса тăнă войскисемпе автотранспорт колоннисем çине тăтăшах бомбăсем пăрахать.

Кунпа пĕрлех Джарабуба районĕсемпе Куфра оазисĕсенче те вăрçă ĕçĕсем пĕр чарăнмасăр, пыраççĕ. Англи командованийĕ Ливин хĕвелтухăç пайне мĕн пулсан та Итали войскисен юлашкийĕсенчен чăсрах тасатма тăрăшать. Анчах кунта итальянецсен пысăк мар чăсĕсем, малăрах Италин пиллĕкмĕш çарĕнчен татăлса юлнăскерсем, Джарабуба патĕнче Англи войскисене тата Куфра районĕнче Франçин де Голль войскисене калама çук вăйлăн хирĕç тăраççĕ.

Италин Хĕвелтухăç Африкинче Англи войскисем наступление сарсах пыраççĕ. Вĕсен Кăнтăр-Африкăри çарĕ, Итали Сомалийĕнче çапăçаканскер, хăйĕн тĕп вăйĕсемпе Джуба юханшывĕн укрепленине туса çирĕплетнĕ чикки патне çывхарса пырать, вăл çар Кени чиккинчен вăтамран 150—200 километр малалла кайнă. Çапăçусем пуринчен ытларах тинĕс хĕррисенче тата Джелиба районĕнче пыраççĕ. Кизимайо портне илнĕ хыççăн, Кăнтăр-Африка чăсĕсем Джуба юханшывĕн анат вĕçĕнче çав шыв урлă каçма хăтланса калама çук вăйлăн çапăçнă. Англин юлашки вăхăтри сводкисенче пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем Джелибăран çурçĕр енчи пунктсенче тата Джумбо патĕнче çав юханшыв урлă каçнă. Джуба юханшывĕ стратеги тĕлĕшĕнчен пысăк вырăнта тăрать, вăл итальянецсен оборонин естественнăй вăйлă линийĕ шутланать, вăл лини Могадишона—Итали Сомалийĕн паллă порчĕпе столицине пымалли çулсене хŭтлесе тăрать. Унта пыракан питех те хаяр çапăçусен пĕлтерĕшне çавăнпа ăнлантарса памалла та ĕнтĕ.

Эритрейăра Англи войскисем малаллă каяймаççĕ, Керен районĕнче Итали чăсĕсем вĕсене вăйлăн хирĕç тăраççĕ. Абиссини сăрчĕсен çурçĕр енчи çамкисем Керен патĕнче 2.300 метр çӳллĕш шутланаççĕ, çакă вăл итальянецсен оборона позицийĕсене чылаях вăйлăлатнă. Англичансем, кăнтăр енчен пырса Асмарăна çапас шутпа, Аррета, Адди-Угри çине обходнăй операцисем тунă, анчах вĕсем палăрмалла результатсемех паман. Çакă вăл Англи командованине хăйĕн мотомехчăсĕсене де Голль генералăн Эль—Гхенран тинĕс хĕрринчи тŭрем вырăнпа, ниçта пăрăнмасăрах Массауана илсе тухакан вырăнпа наступлени туса пыракан войскисемпе вăйлатмалла туса хунă пулмалла. Итальянецсем, Асмарăна—Италин пĕтĕм Хĕвелтухăç Африкинчи çар тата административлă центрĕпе сыхласа хăварас шутпа, Керенĕн мĕнпур вăйпа тăраççĕ. Ютçĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем кунта Аддис-Абеба районĕнчен подкрепленисем илсе пыраççĕ.

Абиссинире Англин Гондар патĕнче çапăçакан войскисем малалла нимĕн чухлĕ те каяйман. Анчах Годжами ятлă сăртлă районра (Тан кŭллинчен кăнтăр енче) Англи войскисемпе пĕрле çапăçакан Абиссини повстанецĕсем Дангила тата Эджабара текен пунктсене илнĕ тата Гондартан Аддис-Абебăна каякан çула тата тухнă. Çакна пула итальянецсен çав района хăйсен вăйĕсен пĕр пайне илсе пымалла пулать.

Мояле-Мега таврашĕнче англичансем наступление ăнăçлăн туса пыраççĕ. Кунта çапăçусем анлăн сарăлса кайнă. Кăнтăр-Африка войскисем Мега пунктне илнĕ, вĕсем Абиссини территорине 100 километр шалта кĕнĕ.

Юлашки вăхăтра Англи командованийĕ Италин Хĕвелтухăç Африкинче пур фронтсенче те авиаци шутне чылаях ӳстернĕ. Англи самолечĕсем, çĕр çинчи войскăсене пулăшнисĕр пуçне, Эритрейăри тата Итали Сомалийĕнчи палăрмасăр Массауана илсе тухакан вырăнпа наступлени туса пыракан войскисемпе вăйлатмалла туса хунă пулмалла. Итальянецсем, Асмарăна—Италин пĕтĕм Хĕвелтухăç Африкинчи çар тата административлă центрĕпе сыхласа хăварас шутпа, Керенĕн мĕнпур вăйпа тăраççĕ. Ютçĕршывсенчи хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, итальянецсем кунта Аддис-Абеба районĕнчен подкрепленисем илсе пыраççĕ.

Майор **К. ВАСИЛЬЕВ.**

Таи тата Франци Индо-Китайĕ

ШАНХАЙ, февралĕн 25-мĕш. (ТАСС). «Гаваньбао» хаçатăн спецкорĕ Гонконгран пĕлтернĕ тăрăх, Таипе Франци Индо-Китайĕ хушшинче перемири тăвассине тăснине пăхмасăрах, икĕ енĕ те, конфликта килĕшӳллĕн татса пама май килмесен, вăрçăна хатĕрленеççĕ. Малалла корреспондент çапла каланă: Франци Индо-Китайĕн правительстви Ханойран Сайгона куçать, Франци Индо-Китай войскисен главнăй штабне, пулма пултаракан вăрçă операцийĕсене ертсе пыракан çăмăллатас шутпа, Камбоджăна куçараççĕ.

Колхозсенчи управлени аппаратне йӳнетмелле

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ хамăр республикăри колхозсенче администрацине управлени тата обслуживани аппаратне пĕчĕклетесси çинчен постановлени йышăнчĕç. Çак решени тăрăх, районсенчи çĕрĕç, совет тата парти оргăнĕсем кăçалхи февраль уйăхĕ хушшинче кашни колхозрах администрацине управлени тата обслуживани аппаратне уйрăмăн пăхса тухмалла. Çавăн чух ытлашши должноҫсене чакармалла, çав постсенчен кăларнă çынсене вара производствăллă бригадăсенче тата выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлеме ямалла.

Республикăри уйрăм колхозсенче администрацине обслуживани персоналĕ мĕнле йĕркеленсе тăнипе тĕплĕн паллашни çак ыйту тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем пуррине кăтартать. Чи паллă çитменлĕхсенчен пĕри вăл—çĕрĕç, совет тата парти оргăнĕсем çак ыйтăва çителĕклĕ таран ертсе тата контроль туса пыманни пулать. Çĕрĕç, совет тата парти оргăнĕсем çак тарана çитсе те колхозсенчи администрацине обслуживани персоналне тĕрĕс йĕркелес ыйтупа çителĕклĕ ĕлкемен. Штатсем çинчен тăракан ыйтăва кашни колхоз правленийĕ, е колхоз председателĕ хăех, уйрăмăн пăхса тухса татнă, акă мĕншĕн ĕнтĕ вăл—республикăри тĕрлĕ районсемпе колхозсенче администрацине обслуживани персоналĕн штатĕсене тĕрлĕ майлă йĕркеленĕ. Колхозсенчи администрацин аппаратне тĕрĕс йĕркелени питĕ нумай çынсене производствăра ĕçлеме пушатать, ялхуçалăхĕнчи тĕп ĕçсене (çураки, çум çумласси, çĕртме сухи тăвасси, тырпулсене пустарса кĕресси, кĕрхи çĕртме тăвасси, ялхуçалăх продуктисен хатĕрлевне тултарасси) пурне те хăвăртрах туса çитерме, ялхуçалăхĕнчи ĕç тухăçлăхне тата тырпул тухăçне хăпартма пулăшать.

Районсенчи парти, çĕрĕç работникĕсем çакна ăнланаççĕ, анчах, апла пулин те, вăл ыйтăва юлашки вăхăта çитичченех тивĕçлĕ вырăна хуман, колхозсенчи администрацин аппаратĕн штатне йĕркелес тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнман. Ку енĕпе Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн ответлăхĕ те пысăк,—çак ыйтăва татас ĕçрен вăл та çаплах пăрăнса тăнă.

Уйрăм колхозсенче штатсем тивĕçсĕр пысăк. Колхоз хуçалăхĕ çине вĕсем йывăр çĕклем пек тиенеççĕ, колхозăн экономикăллă аталанăвне чарса тăраççĕ, колхозри массăсен тата уйрăмăнах стахановецсемпе ударниксен ĕç интересĕсене экономика тĕлĕшпе хĕссе пыраççĕ. Уйрăм колхозсенче тĕрлĕрен «штатлă единицăсен» хŭттине производствăри ĕçрен пăрăнакан, колхоз пурлăхне ахалех çиекен тата хăшпĕр чухне колхозсене ĕçлеме те кансĕрлекен наянсем пытанса тăнă. Колхоз ялĕн тŭрĕ труженикĕсене вăл, паллах, тивĕлипех кăмăлсăр туса тарăхтарать. Управлението обслуживани персоналĕ валли ĕçкунĕсене, ялан пекех, ӳстерсе шутласа панă.

Колхоз членĕсен пĕтĕм хисепĕнчен шутласан, администрацине обслуживанин ĕçĕнче ĕçлекен колхозниксен шучĕ 15,1 процент пулать. (1941 çулти январĕн 1-мĕшне шутланă тăрăх). Калас пулать, çак процент республикăшăн ытлашши пысăк. Абсолютнăй цифрăсемпе кăтартсан, вăл пурĕ 44.957 çын, кашни колхоз пуçне вăтамран 30 çын пулать. Кунта çавна та шута илмелле: администрацине обслуживани ĕçĕнче пуринчен ытла лайăх сывлăхлă, вăйпитти арçынсем ĕçлеççĕ, хĕрарăмсем пачах сахал. Кунтан вара—производствăри, уйри ĕçсенчен арçынсем туса ӳкни тата вĕсене нимрен ытла хĕрарăм-колхозницăсем туса пыни тухса тăрать, çакă вара уй ĕçĕсене вăхăтра тата хăвăрт ирттересси нумайччен палăрмасăр юлма пултараймасть. Пĕтĕм республикине илсен, администраци тата обслуживани ĕçĕнче ĕçлекенсем 15,1 процент шутланаççĕ пулсан, уйрăм районсенче вăл процент çак хисепрен те иртет. Сăмахран, Вăрнар районĕнче—18,6 процент (1665 çын, пĕр колхоз пуçне вăтамран 40 çын тивет), Шăхасан, Советский тата Калининский районĕсенче—кашнинчех 19,0 процент ытла, Элĕк, Шăмăршă районĕсенче—20 процент, Сĕнтĕр районĕнче 22,0 процент. Республикăри хăшпĕр колхозсенче администрацине обслуживани ĕçĕнче ĕçлекенсен проценчĕ уйрăмах пысăк. Сăмахран, Шупашкар районĕнчи «Память Кирова» колхозра ĕçлеме пултаракан çынсенчен 21,9 процент управленин тата обслуживани аппаратĕнче тăрать, вĕсене тытса тăма пĕтĕм ĕçкунĕсен шутĕнчен 45 процентне расходланă; Кĕçĕн Карачура ялсоветĕнчи (Сĕнтĕр районĕ) «Ударник» колхозра ĕçлеме пултараканнисем пурĕ 73 çын, вĕсенчен 37 процентĕ (27 çын) управленипе обслуживани аппаратĕнче ĕçлет, вĕсене тытса тăма мĕнпур ĕçкунĕсенчен 44 процентне расходланă. Çĕрпӳ районĕнчи «Актай» колхозра ĕçлеме пултаракан çынсем 34, вĕсенчен 13 çынĕ (38,2 процент) администрацине хуçалăх ĕçĕнче пурăнаççĕ. Канаш районĕнчи Сталин ячĕпе хисепленекен колхозра пурĕ ĕçлеме пултаракансем 190 çын, производствăри ĕçрен хăтарнă яланлăх кадрсем вăл шутра 33 çын (17,4 проц.), вĕсене усрама 17.160 ĕçкунĕ пĕтернĕ, пĕтĕм колхозра ĕçлесе тунă 40200 ĕçкунĕнчен шутласан, вăл 42,6 процент пулать. Ĕçкунĕсен пысăк хисепĕ кунта администрацине управлени персоналне тытса тăма каять, производствăри ĕçсен тŭпине 47,4 процент çеç юлать. Ытти ĕçсенчен хăтарнă кашни яланлăх кадр пуçне вăтамран 520 ĕçкунĕ тивет, ытти колхозниксем пуçне вара вăтамран 147,8 ĕçкунĕ тивет.

Чылай колхозсенче кирлĕ мар çĕртенех шухăшласа тупнă должноҫсем пур. Сăмахран, Сĕнтĕр районĕнчи 17 колхозра транспорт заведующийĕсем 27 çын пур, вăл шутран «Колос» колхозра—5 çын, Калинин ячĕпе хисепленекен колхозра—4, «1-ое Мая» колхозра—3, т. ыт. те. Шăмăршă районĕнчи «Красная звезда» колхозăн вырăнсем апачĕсене уйăрса парас тĕлĕшпе ĕçлекен яланлăх фуражир, «Юлташ» колхозăн—фуражир тата арман контролерĕ пур. Куславкка районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозра «амунщик» должноҫĕ пур, унăн мĕнпур ĕçĕ хăмăтсене парассипе калълла илессинче пулать.

Администрацине управлени ĕçĕнче ĕçлекен (колхоз председателĕсен заместителĕсен, завхозсен, кладовщиксен, полеводсен т. ыт.) штачĕсене вырăнсăр ӳстерсе янипе пĕрлех, нумай колхозсенче вырăнсăр-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекен ытлашши кадрсем пур, çавна пула работниксем тулли нагрузкăпа ĕçлемеççĕ. Сăмахран, Шăмăршă районĕнчи «Пламя труда» колхоз 8 ĕне пуçне 2 доярка тытать, çав вăхăтрах, Союз Наркомземĕн инструкцийĕ тăрăх, пĕр доярка-скотницăн 8—14 ĕне пăхмалла; çав районрах «Новая деревня» колхоз 41 ĕç лашине тата 27 тихана пăхма 9 конюх тытать, Сĕнтĕр районĕнчи «Серп» колхоз 7 лашана пăхма 2 конюх тытать, анчах, норма тăрăх, пĕр конюхăн сахалтан та 10 ĕç лаши е 15 тиха пăхмалла.

Администрацине обслуживани персоналĕн хальхи штачĕсем, вĕсем ытлашши пысăк пулнисĕр пуçне, вĕсене тытма пит нумай ĕçкунĕ тăкнине кăтартаççĕ. Çӳлте кăтартнă цифрăсенчен, вĕсем колхозсенче тунă ĕçкунĕсен пĕтĕм хисепĕнчен 40—50 процентне ытла пĕтерни курăнать, ăна вара: колхозсене ĕçкунĕсене тĕлĕрĕп пĕтерни, стахановецсен ĕçне хĕсни, тесе çеç калама пулать.

Уйрăм колхозсен хальхи штачĕсене тĕплĕн тишкерсе тухни унти çынсенчен пĕр пайне, колхоз хуçалăхне нимĕн чухлĕ те сиен тумасăр, ĕçрен кăларса производствăллă бригадăсенче ĕçлеме явăçтарма май пуррине кăтартать. Ăна çирĕплетмешкĕн пĕр тĕслĕх илсе кăтартатпăр.

Тури Ачак ялсоветĕнчи (Советский р-) «Крестьянская газета» колхозра ĕçлеме пултаракан 130 колхозникран администрацине обслуживани ĕçĕнче 49 çын ĕçлет (37 проц.), вĕсене тытма ĕçкунĕсенчен 40 процентне ытла расходланă. Усă куракан çĕр лаптăкĕ тĕлĕшпе çак колхоз вăтам колхоз пулса тăрать. Колхозра пурĕ 135 хуçалăх, сухалямалли çĕр 533 гектар, лашасем 93 пуç, вăл шутра ĕçе кӳлмеллисем 63. Колхозăн майракаллă шултра вылăхсем 56 пуç пур, вăл шутра ĕнесем 21, сыснасем 3 пуç, сурăхсем 28, вăл шутра пăрамлаканнисем 21 пуç пур. Колхозăн администраци аппаратĕ çак должноҫсенчен тăрать (1941 çулти январĕн 1-мĕшне): колхоз председателĕ—1, унăн заместителĕ—1, пожарниксем—3, контора работникĕсем—3, уйăҫ бригадирĕсем—4, вылăх пăхакансем—3, ĕне сăвакансем—2, пăру пăхакансем—1, сысна пăхакан—1, конюхсем—13, хуралçăсем—13, склад заведующийĕ—1 тата ытти—7 çын.

Çак колхозăн штатне анализ туни çынсен çителĕклĕ ĕç пулманнине кăтартать. Колхозсен ĕç практикинче ун пек япала пулмалла мар. Ку колхозра, пĕр сиен тумасăрах, производствăри ĕçсене 15 çын уйăрса яма пулать: 5 конюха (63 ĕç лашине пăхма 6 конюх çителĕклĕ, кашни конюхăн вăтамран 10—11 лаша пăхмалла пулать, тихасене пăхма 2 конюх çитет, вĕсен 15-шер тиха пăхмалла пулать), 3 скотнике, 1—2 хуралçăна, 1 культурнике, 1 пожарникне тата ытти ĕçсенчи виҫĕ работнике.

Çакнашкал тĕслĕхсем нумай колхозсенче палăраççĕ. Колхозсенчи штат ыйтупе практикăлла татса панă чух районри çĕрĕç пайĕсен тата ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсен ĕç çине механически, çăмăллăн пăхмалла мар, кашни колхоза уйрăмăн, унăн экономикăпа хуçалăхĕ мĕнлине шута илсе пăхмалла.

Хăшпĕр колхозсен председателĕсем, çавнашкалах районсенчи çĕрĕç пайĕсем те, ВКП(б) Обкомĕпе Чăваш АССР Совнаркомĕ çак ыйтупа йышăннине тĕрĕсех ăнланса çитеймен. Çак ыйтăва практикăлла пурнăçланă чух хăшпĕр колхозсен председателĕсем (сăмахран, Елчĕкри «Осоавиахим» колхозра) производствăллă бригадăсене чакарас, пĕрлештерсе ярас çул çине тăнă, çапла майпа вĕсем бригадирсене, ытлашши çынсем пек, ĕçрен кăларма шут

„Коммунист“ колхозăн обществăллă хуçалăхĕ

ИШЛЕИ. Унă çул каярах, 1931 çулти февралĕн 23-мĕшĕнче, Мамăш ялсоветне кĕрекен Аначкасси, Пранька тата Вурмой ялĕсенчи хресченсем 39 килĕрен колхоз организациленĕ. Малтанхи вăхăтра колхозăн нимех те пулман. Унăн пурĕ те 21 лаша, 19 плуг, пĕрлештернĕ хăшпĕр суртĕйĕрсем, кăлмеллĕх урапа-çуна тата тепĕр икĕ молотилка пулнă.

Тепĕр çулне вара колхоз 11 сыснаран ферма организацилет тата, тепĕр 6 ĕне туянса, сĕт-çу ферми организацилеме тытăнать. Анчах сысна ферми часах саланса каять. 1933 çул вĕçнелле колхозăн пĕрлештернĕ вылăхсенчен мĕнпурĕ те пиллĕк ĕне кăна (лашасемсĕр пуçне) тăрса юлать. Çапла вара сĕт-çу ферми те йĕркеленсе çитеймест.

Организациленĕ сысна ферми саланса кайни мĕнрен килнĕ-ха? Организацилеме пуçланă сĕт-çу фермине мĕншĕн виçĕ çул хушшинче те ура çине тăратайман? Çаксене тума колхозăн, паллах, вăй çитнĕ. Илер, акă, 1934 çула. Çак çулта колхозăн 360 гектара яхăн çĕр пулнă. Çапла вара фермăра 10 ĕне усрас плсан та, пĕр ĕне пусне 36 гектар çĕр тивнĕ. Тĕрĕссипе вара колхозăн 1934 çулта та 5 ĕне çеç, урăхла каласан, 72 гектар пуçне пĕр ĕне пулнă.

Сăлтав, хамăрах куратпăр ĕнтĕ, пĕртте вăй çитменнинче мар, пачах урăх çĕрте, обществăллă вылăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç çине сӳрĕккĕн пăхнинче, кая юлнă туртăма хирĕç çителĕклĕ кĕрешменнинче пулнă.

1935 çулта вара колхоз сĕт-çу фермине тивĕçлипех йĕркелеме тытăннă, фермăри вылăхсен хисепне 16 пуçа çитернĕ. Çак çултан пуçласа фермăри вылăхсен хисепĕ çулран-çулах ӳссе пыма тытăнать.

Çак иртнĕ пиллĕк çул хушшинче «Коммунист» колхоз организацине хуçалăх енчен чылаях тĕрекленчĕ. Унăн обществăллă хуçалăхĕ уйрăмăнах 1938—1940 çулсенче вăйлăн аталанчĕ. Халĕ колхозăн сĕт-çу ферминче 40 пуç майракаллă шултра вылăх, сурăх ферминче 45 пуç сурăх шутланать. Кусемсĕр пуçне колхозăн сысна, чăхчĕн тата хур фермисем пур. Тăвата гектар ытларах çĕр çинче çимĕç паракан тĕрлĕрен йывăçсем лартса ĕрчетнĕ. Çавăнтах утар пур. Унта 19 вĕлле пылхурчĕ усрассĕ.

Колхозăн обществăллă хуçалăхĕ хăвăрт аталанса пырать. Уйрăмăнах колхозăн обществăллă суртĕйĕрсем йышланса пынине кăтартса хăвармалла. Пĕр иртнĕ çулта кăна çĕнĕ клуб, 60 пуç вырнаçмалăх сурăх вити, 40 пуç вырнаçмалăх пăру вити, 40 вĕлле вырнаçмалăх омшаник туса лартнă.

Обществăллă суртĕйĕрсен хисепне колхоз килес çул татах ӳстерме шутлать. Кăçал укçан илнĕ тупăшран пайланман фонда 20 пин тенке яхăн (планпа пăхнинчĕн 12 пин тенкĕ ытла) уйăрса хунă.

Малтанхи вăхăтсенче артелĕн хуçалăхĕ пĕр енлĕ хуçалăх кăна пулнă: пуринчен ытларах тĕштырă акса тăвас тĕлĕшпе ĕçленĕ. Халĕ вара пачах урăхла: артель хуçалăхĕ пур енлĕ хуçалăх пулса пырать. Ăна эпир çакăнтан та аван куратпăр: 1935 çулта, сăмахран, çулталăк хушшинче тунă пĕтĕм ĕçкунĕнчен 83 проценчĕ уй ĕçне тунă çĕре кайнă. 1940 çулта вара вăл хисеп 60 процента çити чакнă. Уй ĕçне тума тухакан ĕçкунĕсен хисепĕ чакнă пек, колхозниксем уйра сахалтарах ĕçлеме пуçланă пек, çапла вара, вăйлă тырпулăн пыракан кĕрешӳ вăйсăрланнă пек курăнать. Анчах, тĕрĕссипе илсен, пĕртте ун пек мар. Ун çинчен кайрантарах калăпăр.

Колхозăн укçан илекен тупăшĕ те çулсеренех ӳссе пырать. Колхоз организациленнĕ хыççăнхи иккĕмĕш çулĕнче, 1932 çулта, пĕтĕмпе 3406 тенкĕ укçан тупăш илнĕ. Колхоза панă çĕрĕн кашни гектарĕ çине пайласан—12 тенкĕ те 40 пус пулать. Иртнĕ çулта укçан 52 пин тенкĕ ытла, е колхоза çирĕплетсе панă çĕрĕн кашни гектарĕ пуçне 108 тенкĕ илнĕ.

Çакăн пек тĕрекленсе пырать, кăскен каласан, колхозăн обществăллă хуçалăхĕ, çавăн пек аталанса, пур енлĕ пулса пырать унăн хуçалăхĕ.

Колхоз пур енчен те тĕрекленсе пыни колхозниксене тĕрĕссипех савăнтарать, ĕçре те хавхалантарать. Колхозниксем колхозăн обществăллă производствинче ытларах та ытларах ĕçлеме пуçларĕç. 1932 çулта кашни ĕçлеме пултаракан колхозник вăтамран 49 ĕçкунĕ тунă пулсан, иртнĕ çулта 198 ĕçкунĕ тунă. Малтанхи çулсенче ĕçе пачах тухман колхозниксем те пулнă. Илер, акă, каллех 1935 çула. Ун чухне 50 ĕçкунĕ таран та туман колхозниксем 18 процент, 51 пуçласа 100 ĕçкунĕ таран тунисем 55 процент, анчах 101 пуçласа 200 ĕçкунĕ таран тунисем 22 процент кăна пулнă. 1939 çулта 50 ĕçкунĕ таран тунисем пĕтĕмпе те 3 процент кăна пулнă. Вĕсем те пулни — ватă-вĕтĕсем кăна. 51 пуçласа 100 ĕçкунĕ таран тăвакан колхозниксен хисепĕ те чакнă. Ун вырăнне вара 101 пуçласа 200 ĕçкунĕ таран тăвакан колхозниксен хисепĕ 22 проценткан 57 процента çити ӳснĕ.

Вăйлă тырпул туса илес тесен çĕр çинче нумай тата тимлĕн ĕçлес пулать. Пĕр сухаласа акнипех тырă тухăçĕ ӳсмест: уйра юр та тытмалла, калчасене апат та памалла, çум та çумламалла, вăрлăхсене те тĕплĕн тасатмалла т. ыт. те. Мĕн куратпăр-ха эпир «Коммунист» колхозра çак енчен илсе пăхсан? Акă мĕн: 1935 çулта тĕштырă акнă кашни гектар пуçне 70 ĕçкунĕ тухнă. Пĕр гектартан ун чухне вăтамран 9,66 центнер тĕштырă илнĕ е уйхир ĕçне тума тухнă кашни пĕр ĕçкунĕ пуçне 13,5 килограмм тивнĕ. 1940 çулта вара тĕштырă акнă кашни гектар пуçне 88 ĕçкунĕ тухнă. Пĕр гектартан вăтамран 13 центнер тĕштырă илнĕ е уйхир ĕçне тума тухнă кашни пĕр ĕçкунĕ пуçне 14,6 килограмм тивнĕ. Çапла вара, 1935 çултипе танлаштарсан, пĕр гектар пуçне ĕçкунĕ 25 процент ытларах тухнă, анчах пĕр гектартан вăтамран илекен тырă тухăçлăхĕ вара 34 процент ӳснĕ.

Калас пулать, колхозăн тырпул тухăçлăхĕ çителĕклĕ мар-ха. Унă çул хушшинчи вăтам тухăçлăх 10 центнер шутланать. Партипе правительство тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе панă задание пурнăçлас тесен чылай ĕçлемелле.

Колхозăн тата çакăн пек çитменлĕхсем пур. Сăмахран, сысна ферми йĕркеллĕ организациленсе çитеймен, урапа-çуна лартмалли сарайсем те питех мар.

Паллах, колхозниксем, колхоз правленийĕ тата колхозри коммунистсем çине тăрса тытăнсан, вăл çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерĕç.

М—н.

Çураки ĕçĕсем

АЛМА-АТА. Казахстанăн кăнтăр пайĕнче тĕштырă культурисене акасси анлăн пырать. 10 пин гектар ытла акнă та ĕнтĕ. Кировский районра виçĕ МТС-ри трактористсем Голодная çенхир тенĕ çĕрте ĕмĕр-ĕмĕр хушши выртнă çеремлĕ вырăнсене сухалаççĕ. Çĕрмамăк валли 500 гектар сухалана.

Павлов вĕрентĕвне малалла аталантарса пымалли çулйĕрсем

(Аслă физиолог вилнĕренпе 5 çул тултарнă тĕле)

И. П. Павлов ячĕпе вырăс физиологийĕнчи кăна мар, тата пĕтĕм тĕнчери физиологири пĕр-пĕтĕм самана сыхăнса тăрать. Физиологине вăл оригиналлă новатор тата гениллĕ экспериментатор пулса кĕнĕ, çак наукăн сăн-сăпатне пĕтĕмĕшпех çĕнетсе улăштарнă, унăн хăшпĕр пĕтĕм глависене çĕнĕрен тунă. Çавăнпа та ĕнтĕ ăна пĕтĕм тĕнчери физиологсем хăйсен старшини, физиологин сĕм аваллăхри ĕçĕсене унăн кучухнехи çитĕнĕвĕсемпе телейлĕн сыхăнтарса пĕрлештернĕ çын, тесе шутланă.

Çамрăк чухнехи çулсенче естествознание вĕренме чĕннĕ Писаревăн просветителле идейисем хыççăн кайса, Павлов естествознание хăй виличченех юратса пураннă.

Хăйĕн пурнăçĕ вăхăтĕнче Иван Петрович тавра пысăк йышлă учениксем пулнă, вăл пĕр хут çеç мар шухăшласа пăхнă: çак учениксем аллинче манăн вĕрентĕвĕм малалла мĕнле аталанса пырĕ-ши, тенĕ. Акă 5 çул хушши ĕнтĕ Павлов шкулĕ хăйĕн руководителĕсĕр ĕçлет. Çапла ыйтни вырăнлă пулĕ: Павлов вĕрентĕвĕ мĕнле аталанса пырать-ха? Совет физиологийĕ тунă çĕнтерĕвĕн ялавне И. П. Павлов хăйĕн аллинче çирĕппĕн тытса пынă пек çулте тытса пыратпăр-и эпир?

И. П. Павловăн творчествăллă генийĕ нумай енлĕ пулнă. Нумайĕшĕ Павлов пуç мимин çĕнĕ физиологийĕн авторĕ пулнине кăна пĕлеççĕ. Анчах та унăн чи пирвайхи научнăй тĕпчевĕсен направленийĕсем те хальхи вăхăтра совет физиологийĕн пысăк шкулĕсем пулса тăчĕç. Çапла, сăмахран, чĕре ĕçне вăйлатакан специальнăй нерва тупса, И. П. Павлов нервăсен системин трофически функцине тĕпчесе вĕренмелли çулйĕре палăртса панă. **Хальхи вăхăтра** унăн чи ватă ученикĕсенчен пĕри, академик Орбели, Павловăн çак çитĕнĕвĕсем тăрăх ĕçлесе, симпатически нерв системин трофически функцийĕ çинчен калакан вĕрентĕве малалла аталантарса пырать.

Пищеварительнăй трактра операцисем тунă чухне суран натĕнчи карăнтарса тăракан пур йышши çĕвĕксем те тканьсен питанийĕнчи çивĕч улшăнусемпе изъявлениесем патне илсе пынине асăрхаса илсе И. П. Павлов çакăн пек шухăшланă: кирек мĕнле патологиллĕ процесс та нерв системи урлă чи инçетри органсем çине влияни пама пултарать. Хальхи вăхăтра Спецăнский академикăн шкулĕ çав проблемăна татса парас тĕлĕшпе анлă ĕçсем тăвать, çак шкул физиологипе медицинăна çыхăнтаракан вырăн йышăнса тăрать.

Павлов пищеварительнăй каналра тунă чаплă операцисене (Павлов фистулисене) пĕтĕм тĕнче пĕлет. Павлов операцийĕсем тĕпчевçĕне пищеварении чи шалти процессĕсене, çинĕ апата çĕртме пулăшакан процессене кĕрсе пăхма май панă. Çак питех те пуян область тĕлĕшпе хальхи вăхăтра совет физиологĕсен темиçе шкулĕ—Разенков, Быков тата Фольборт профессорсен шкулĕсем ĕлĕççĕ.

Павлов творчествăллă ĕçре ывăнма пĕлмесĕр ĕçленĕ. 1900 çулта, вăл хăй калани тăрăх, «лабораторири пĕр ĕç вăйлă влияни панипе» Павлов пуç мимин ĕçне тĕпчесе вĕренме тытăнать, çĕнĕ наука—высший нервнăй деятельноçăн физиологине—туса йĕркелет. Павлов пуç мимине материалистла мелсемпе тĕпчесе вĕренме хăтланса пăхни—чăннипех те революци пулса тăнă. Ун чухне наука пуç мимине сăнаса вĕренес ĕçе тĕмĕшпех психолог-идеалистсен аллине шанса панă пулнă. Акă мĕншĕн ĕнтĕ высший нервнăй деятельность çинчен калакан вĕренĕве буржуаллă чылай çĕршывсенче халĕ те пит кăмăлласах каймаççĕ. Англири пысăк та паллă физиолог Шеррингтон пĕрремĕнче И. П. Павлова тепĕрен çапла калана: «Сирĕн условнăй рефлекссем Англине çăмăллăнах кĕреймĕç, мĕншĕн тесен вĕсенчен материализм шăрши кĕрет». Условнăй рефлекссем тĕлĕшпе 36 çул хушши ĕçлесе, Павлов çакна ĕнентерӳллĕн кăтартса панă: высший нервнăй деятельность физиологийĕ вăл—миме ĕçĕн чи сложнăй формисене сăнаса вĕренмелли пĕртен-пĕр материализмлă çул. Павлов нерв системинчи невротически сдвигсен теорине, ыйхă, гипноз теорине, нерв системин типовăй уйрăмлăхĕсен теорине, торможени теорийне туса йĕркеленĕ т. ыт. те. Хальхи вăхăтра çак çитĕнӳсем пурте ĕнтĕ унăн ученикĕсен сăнавлă-тĕпчевлĕ ĕçĕсенче тĕп вырăн йышăнса тăраççĕ.

И. П. Павлов хăйĕн мĕнпур творчествăллă ĕçне условнăй рефлекса çуралса тухма физиологиллĕ мĕнле механизмсем пулăшнине, çак ĕçре пуç мимин корки тата корка айĕнчи ядросем мĕнле вырăн йышăнса тăнине палăртас тĕлĕшпе туса пынă. Профессор Купалов (Ленинград), пуç мимин коркипе корка айĕнчи пайĕ пĕр-пĕринпе çыхăнса ĕçленине сăнаса вĕренсе, çакăн пек вывод патне пырса тухнă: пуç мимин корки айĕнче мĕнпур условнăй çыхăнусене тытса пыракан специальнăй пищевой центр пулмалла, çав условнăй çыхăнусем апат подкрепленийĕ пулăшнипе пулса тăраççĕ. Пуринпĕн те паллă, Павлов вĕрентнĕ тăрăх, вăл тулашри кирек мĕнле раздражитель те (çутă, звонок, шаккана сасă т. ыт. те), апат çинипе çирĕпленсе, малалла сĕлеке уйăрса кăларттарма пултарать, çакна пула вара условнăй рефлекс пулса тăрать. Шăпах çак условнăй çыхăну ĕнтĕ, профессор Купалов шухăшланă тăрăх, пищевой центр пулăшнипе пулать.

Профессор Анохинăн лабораторийĕнче (Мускав) пуç мимин коркинче усложнă-рефлекторнăй деятельность вăхăтĕнче çуралса тухакан электричествăллă импульссене сăнаса вĕренеççĕ. Çак лабораторирех 1930 çулта высший нервнăй деятельноçа сăнаса вĕренмелли çĕнĕ методпа усă курма пуçланă. Çак метод пулăшнипе пĕр вăхăтрах секретлă тата двигательнăй условнăй рефлекссене учета илсе пыма май килнĕ.

Высший нервнăй деятельность çинчен калакан вĕрентӳри пысăк та паха глава вăл—высший нервнăй деятельноçăн патологине сăнаса вĕренни. Павлов «экспериментальнăй невроз» çинчен, урăхла каласан, лаборатори обстановкинче илекен невроз çинчен калакан вĕрентĕве туса хатĕрлесен, çав патологиллĕ улшăнусен çын клиникине мĕн таран куçарма пулнине тĕрĕслеме май килнĕ. Çавăн чухнех, 1925 çулта, И. П. Павлов психиатрипе нерв клиникинче ĕçлеме пуçланă. Вăл хăйĕн ученикĕсемпе пĕрле çав клиникăсенче выртакан чирлĕ çынсене лабораторире илнĕ фактсем енĕпе сăнаса вĕреннĕ.

Теорипе практикăна пĕрлештерсе тăракан çав ĕçсем пулăшнипе çыннăн невротический состояние сыватас ĕçре оригиналлă нумай методсем палăртса хатĕрленĕ. Çапла, сăмахран, лаборатори опытсемпе палăртса хатĕрленĕ методсемпе, пĕчĕк дозăна илнĕ бромпа усă курса сыватмалли методпа чирлĕ çынсене сыватнă çĕрте анлăн усă курнă. Охранительнăй торможени теорине хатĕрленĕ, çак теори И. П. Павловăн ученикне Иванов-Смоленский профессора психикăллă йывăр чирпе—шизофренирен ăйăпа сыватмалли мелпе анлăн усă курма май панă.

Хальхи вăхăтра высший нервнăй деятельноçăн патологийĕ енĕпе лабораториллĕ тата клиникăллă опытсем тăвас ĕçе уйрăмăнах М. К. Петрова, Иванов-Смоленский, Долин тата Майоров профессорсем анлăн сарса пыраççĕ.

Павлов пурăннă вăхăтра высший нервнăй деятельноçа сăнаса вĕренес ĕçре татах та тепĕр паха направлени—миме ĕçĕнче шалти органсем мĕнле вырăн йышăнса тăни çинчен тата, тепĕр майлă, пуç мимин корки шалти органсен ĕçĕ çине мĕнле влияни пани çинчен калакан направлени палăртса хатĕрленĕ. Профессор К. М. Быков ертсе пыракан çак направлени хальхи вăхăтра клиникăллă медицина практикине кĕме çул тупса пырать. Быков опычĕсем психика урлă шалти органсен ĕçĕ çине влияни пама тата шалти органсен ĕçĕ урлă психика ĕçĕ çине влияни пама май пуррине кăтартса панă. Çак опытсем тăрăх профессор Быков халиччен «подсознательнăй» (ăнлану тулашĕнчи) тесе ят панă явленисене физиологи енĕпе ăнлантарса пама тăрăшать.

Профессор Розенталь (Ленинград) тăвакан опытсем питех те интереслĕ. Вăл пуç мимин коркине сӳсе пăрахать, унтан вара высший нервнăй деятельноçра мĕнле улшăнусем пулнине сăнаса вĕренет. Проф. Розенталь çакна палăртнă: условнăй рефлексăн пуç мимин коркинче мĕнле те пулин пĕр паллă нервлă структура çук, çав структурăна вăл аркану условийĕсене кура усă курать. Унăн опычĕсенче çакăн пек ĕçсем те пулнă: пуç мимин коркине сӳсе пăрахнă хыççăн хăварнă пысăк мар корка участокĕ условнăй рефлекссене тĕрĕс туса пынă.

И. П. Павлов вилнĕ хыççăн высший нервнăй деятельность физиологийĕн эволюциллĕ направленийĕ уйрăмăнах Колтуши (халĕ Павлово) станцинче академик Орбели ертсе пыннипе анлăн сарăлса кайнă. Кунта питех те тĕрлĕ йышши чĕрчунсен, хурт-кăпшанкăсен, кайăк-кĕшĕксен, çын евĕрлĕ обезьянăсен тата йытăсен высший нервнăй деятельноçне сăнаса вĕренеççĕ.

Çӳлте çырса кăтартнă направленисем, паллах ĕнтĕ, Совет Союзĕнче Павлов шкулĕ енĕпе хальхи вăхăтра туса ирттерекен мĕнпур ĕçсем пулса тăмаççĕ. И. П. Павловăн ватă ученикĕсем ертсе пыннипе периферисенче те нумай лабораторисем ĕçлеççĕ, вĕсем те высший нервнăй деятельноçа тĕрлĕ енчен сăнаса вĕренеççĕ (Рожанский (Ростов), Архангельский (Днепропетровск), Журавлев (Воронеж) профессорсен т. ыт. те). Павлов шкулĕ вăл—чăннипе илсен, пĕтĕм совет физиологийĕ тата ютçĕршывсенчи лабораторисен пысăк пайĕ.

Павлов ĕçне тата вăл палăртса хатĕрленĕ наукăн тĕнчери авторитетне совет ученăйĕсем тивĕçлĕ пек çӳлте тытса тăраççĕ. Высший нервнăй деятельноçăн физиологине, вырăс çĕрĕ çинче çуралса аталаннă наукăна аталантарма совет правительстви чи лайăх условисем туса пачĕ. Эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр: наукăпа творчество çине çавтерн пысăк тимлĕхпе пăхакан пирĕн çĕршывра аслă физиолог вĕрентĕвĕ малашне те ӳссе чечекленсе пырĕ.

Профессор П. АНОХИН,

ВИЭМ-ăн нейрофизиологи отделĕн заведующийĕ.

Мускав.



УКЕРЧЕК ÇИНЧЕ: академик И. П. Павлов.

ТАСС фото-ӳрчĕкĕ.

Пĕрремĕш кварталти финплана ăнăçлăн тултарар

Пĕрремĕш кварталăн малтанхи çурринче районсенчи финанс работникĕсем, партипе совет организацийĕсем пулăшса пыннипе, чылай лайăх ĕçлерĕç. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ уçăлнă тĕле квартал планне 52,5 процент тултарнă.

Элĕк, Красноармейский, Калининский, Ишлей, Кувакино, Улатăр, Шупашкар, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ районĕсем тата Çĕмĕрле хули укçа-тенкĕ планне тултарас енĕпе чылай малта пыраççĕ. Çĕмĕрле, Йĕпреç, Куславкка, Тăвай, Октябрьский, Вăрмар, Пăрачкав, Канаш, Чкаловский, Шăмăршă районĕсем, иртнĕ икĕ вунăкунлăхра хăйсен ĕçĕсене хăштах лайăхлатрĕç пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, çак районсенче укçа-тенкĕ пухасси çителĕксĕр пырать. Çаксем тата ытти хăшпĕр районсем финанс работникĕсен январь уйăхĕнче пуçса иртнĕ канашлăвĕнче ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе хăйсем çине илнĕ обязательствăсене пурнăçа кĕртсе çитереймерĕç.

Государство дохочĕн пĕрремĕш квартал планне иртнĕ пиллĕк вунăкунлăхра 58,3 процент тултарнă. Ку начар мар. Анчах уйрăм отрасльсем енĕпе илсен, хăйсен обязательствисене бюджет умĕнче пачах çителĕксĕр тултарса пыраççĕ. Сăмахран, спирт промышленноçĕ иртнĕ пиллĕк вунăкунлăхра бюджета 630 пин тенкĕ, Етĕрнери çу завочĕ 413,1 пин тенкĕ паман. Çак предприятисен çитес кунсенчех хăйсем çине илнĕ обязательствăна пурнăçа кĕртме кирлĕ мероприятисем туса ирттерес пулать.

Партин XVIII конференцийĕ Маленков юлташ докладĕ тăрăх йышăннă резолюцире плана тултарассишĕн кĕрешни, план тăрăх ĕçлесси мĕне пĕлтерни çинчен лайăх каласа хăварнă. Вăл çакна пĕлтерет:

«а) продукци туса хатĕрлес тĕлĕшпе çулталăкри, кварталти тата уйăхри плана, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе мар, планпа йышăннă тăрăх, хатĕр продукцисене туса кăлармалли малтанах хатĕрленĕ график тăрăх, пĕртан тултарса пымалла;

б) плана промышленность отрасльсем тăрăх, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе çеç мар тултармалла, ăна кашни уйрăм предприяти тăрăх тултарса пымалла;

в) плана предприяти тăрăх, халиччен пулнă пек, вăтамран илсе çеç мар, ăна кашни кун, кашни цехра, кашни бригадăра, кашни станок çинче, кашни сменăра тултарса пымалла;

г) плана хисеп тĕлĕшĕнчен çеç мар, пахалăх, комплект тата ассортимент тĕлĕшĕнчен те обязательно тултарса пымалла, çирĕплетĕ стандартсене тата таварăн хăйне ларакан хакĕ планпа мĕн чухлĕ тăмаллине те пăхăнса ĕçлемелле». (Маленков юлташ докладĕ тăрăх йышăннă резолюцирен).

ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ йышăннă решени финанс работникĕсене те пĕртанах пырса тивет. Çак решени плана кашни кун, декадăран декадăна тултарса пыма вĕрентет, плана вăтамран илсе мар, хисеп енчен кăна мар, пахалăх енĕпе те тултарса пырассишĕн кĕрешме вĕрентет. Çакна финанс работникĕсен те кулленех пурнăçа кĕртсе пыни кирлĕ. Тунă çитĕнӳсем çинче лăпланса ларма юрамасть, вăл çитĕнӳсене çирĕплетсе тата пысăкрах çитĕнӳсем тума ĕççыннисене мобилизацилесе пыни кирлĕ. Ку енĕпе пирĕн лайăх ĕçлекен финанс работникĕсем те сахал мар. Элĕк районĕнчи райфо заведующийĕ Семенов юлташ финанс планне малтанхи декадăранах ăнăçлăн тултарса пыннипе республикăра пĕрремĕш вырăна йышăнчĕ. Февралĕн 21-мĕшне квартал планне 81.5 процент тултарнă.

Пĕрремĕш квартал планне тултарассине республикăра иккĕмĕшпе виçĕмĕш вырăна Ишлейпе Красноармейский районсем тухрĕç.

Çак районсем ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе хăйсем çине илнĕ обязательствăна ытлашшипех пурнăçа кĕртрĕç. Халĕ вĕсем СССР Верховный Совечĕн VIII Сессийĕ уçăлнă ятпа çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн кĕрешеççĕ.

Республикăри ытти районсем те малта пыракан районсемпе танах кĕрешме пултараççĕ. Пĕрремĕш квартал планне вăхăтра тултарма пур районсен те условисем çителĕклĕ. Ку ĕçре конкретлăн ертсе пыни, ялсенчи финанс активĕпе ытларах сыхăнса ĕçлени кирлĕ.

И.ЗОЛОТНИКОВ.

Эпир палăртнă ĕçсем

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ вырăнти чĕртаварсем куллен кирлĕ таварсем тата продовольстви тăвассине ӳстермелли мероприятисем çинчен йышăннă постановлени халăх хуçалăхне аталантарса пырас, ĕççыннисен ыйтăвне тивĕçтерес пырас ĕçре калама çук пысăк выраи йышăнса тăрать. Çакна Çĕрпӳри «Перламутр» артель членĕсем лайăх ăнланса илнĕ. Вĕсем ĕççыннисем валли куллен кирлĕ таварсем туса кăларма çĕнĕ цехсем организацилеççĕ. 1941 çулта пĕрремĕш кварталта шăмăран тӳмме туса кăларакан çĕнĕ цеха ĕçе ямалла, ăна валли станоксем те кӳрсе килнĕ ĕнтĕ. Çавăн пекех шăмăран расческăсем, пуç турисем тата шăл тасатмалли щеткăсем туса кăларма вĕренсе çитнĕ. Çакна май отходсенчен столярнăй клей тата техникăра кирлĕ çусем, Кавказ пиçиххийĕсен пряжкине тата брошкăсем туса кăларас ыйту тухса тăрать. Çак производствăна пирĕн хăвăрт аллă çавăрса илни кирлĕ. Пирĕн атăпушмак çĕлекен мастерской çумĕнче галош, велосипед камерисемпе покрышкисене тата волейболпа футбол камерисем, кӳлмелли хатĕрсем юсамалли çĕнĕ цехсем ĕçе кĕмелле. Апрель уйăхĕнчен пуçласа урапа сĕрмелли маç туса кăларма тытăнатпăр.

Çапла вара, çак çӳлте асăннă мероприятисене пĕтĕмĕшпех лурнăçа кĕртсе çитерсен, пирĕн артель куллен кирлĕ таварсене, 1932 çулти хакпа танлаштарсан, 1.320 пин тенкĕлĕх туса кăлармалла, е вăл иртнĕ çултинчен 56 процент ытларах пулать.

Пирĕн предприятире çĕнĕ цехсем организацинленĕ май, артель умнэ тӳмме туса кăларакан фабрика валли çĕнĕ çурт лартас, производствăна механизацилес тата силовой хăватне вăйлатас ыйту тухса тăрать. Мĕншĕн тесен, фабрикăн халăхи çурчĕ пĕчĕккĕ пирки рабочисен ĕç тухăçлăхне ӳстерсе пыма тата санитари правилисене пăхăнса ĕçлеме чăрмантарать. Çавăнпа та пирĕн артеле районри организацисем енчен тата Чăвашпромсоюз енчен кулленех пулăшса пыни кирлĕ. Уйрăмăнах артель валли кирлĕ таран чĕртавар тăратас, производствăра кирлĕ пулакан пур йышши инструментсене те вăхăтра тупса парас ĕçре пулăшу кирлĕ пулать.

М. КУЗНЕЦОВ.

Артель правленин председателĕ.

Ялхуçалăх артелĕн уставне пăсаççĕ

Куславкка районĕнчи Молотов ячĕпе тăракан тата «Первомайск» колхозсем пайланман фонд тăвас енĕпе ялхуçалăх артелĕн уставне пăсаççĕ. Вĕсем пайланман фондсене çулран çулах тултарса пымаççĕ.

Молотов ячĕпе тăракан колхоз 1940 çулта укçан илекен тупăшран 4 пин тенкĕ ытла фонда уйăрса тултарман. Çавăн пекех «Первомайск» колхозра та фонда 2 пин тенкĕ уйăрман.

Колхоз правленисен укçа-тенкĕ расхочĕсене смета тăрăх анчах туса пымалла. Кунсăр пуçне вĕсем расход тумалли сметăн укçа-тенкисене пĕр статьяран тепĕр статьяна куçарма та пултараймаççĕ. Асăннă колхозсем çак йĕркене пăхăнмаççĕ.

«Первомайск» колхозра лаша сутнă пулнă. Устав тăрăх çак укçана колхоз правлени хăй тĕллĕн урăх çĕре салатма пултарайман. Сутнă лаша вырăнне урăх илмелле пулнă. Вĕсем лаша сутнă укçана колхоз канцелярийĕ валли, тимĕрçе ĕçукçи пама т. ыт. çĕре салатса пĕтернĕ.

Пайланман фондри укçа-тенкĕне усăсăр салатса яни колхозсене пысăк сиен кӳрет. Молотов ячĕпе тăракан колхозра лаша кӳлмелли хатĕрсем çитмеççĕ. 48 лашаран 18 лаша валли кăна хĕлле кӳлмелли хатĕрсем пур. Суллахи вăхăтра кӳлмелли хатĕрсем 6 лаша валли çеç. «Первомайск» колхозра та лаша тавраш ĕçĕсене кăна тăвакан хатĕрсем çитерсе панă. Çакăн пирки ĕçлеме кайма юрăхлă лашасем ахалех тăраççĕ.

Лашасемпе пуринпе те ĕçлеменнипе ялхуçалăх ĕçĕсене вăхăтра пурнăçлама май çук. Укçа-тенкĕ ĕçлесе илме те йывăр. Çак сăлтавсемпе колхозсем укçа-тенкĕ тупăшĕн планне иртнĕ çулта тултарайман.

Устав тăрăх ялхуçалăх артелĕсен укçа-тенкĕсене хăйсен счечĕ çинче банкра, е перекет кассинче усрамалла. «Первомайск» тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем укçа-тенкĕсене банкра усрамаççĕ, хăйсен кассинче тытаççĕ. Кассăра тытакан укçа-тенкĕпе кирлĕ пек усă курмаççĕ, усăсăр салатса яраççĕ.

Ялхуçалăх банкĕнчен кивçен илнĕ укçасене вăхăтра тавăрса памалла. Ку колхозсем укçа-тенкĕсене каялла тавăрса памалли срок икĕ çул каялла иртнĕ пулин те парса татман.

Колхоз правленисемпĕн ялхуçалăх артелĕн уставĕ çирĕп закон пулса тăрать. Çак закона пăсма никама та нирĕк паман.

С. ФЕДОРОВ.

Колхозăн хăйĕн агроном пур

ÇĔРПУ. «Красная Поварня» колхоз районра чи пысăк колхоз шутланать. Ялхуçалăхĕн малта пыракан агротехникине тĕплĕн пĕлекен çынсемсĕр — агрономсăр çакăн пек пысăк тата нумай енлĕ хуçалăха ертсе пыма йывăртарах. Çавăнпа та, колхозниксен иртнĕ çулти декабрь уйăхĕнче пулса иртнĕ пухăвĕ колхозра пĕр агроном пулмаллах, тесе йышăнса хăварнă.

Халĕ колхозăн хăйĕн агроном пур. Татьяна Антонова агроном «Красная Поварня» колхоза ĕçлеме пынăранпа икĕ уйăх çеç иртнĕ. Çак кĕске хушăрах вăл малта пыракан колхозниксемпе колхозницăсене хăй тавра пĕтĕçтерме пултарнă. Колхозра халь стахановла шкул ĕçлет. Колхозри пĕтĕм ĕçсене план тăрăх туса пыма тытăннă. Антонова юлташа колхозниксем юратасçĕ, унăн сăмахĕсене итлеççĕ.

Çитес çуракинче тĕштырă акса хăварнă сĕр лаптăкĕшĕ 324 гектар, ĕрулми лартмалли — 28 гектар тата промпахча 9,5 гектар. Çакăн чул çĕр лаптăкĕшне акса хăварма кирлĕ машинăсемпе инвентарьсене те тахçанах юсаса хатĕрленĕ.

Колхозра 4 ферма. Сĕт-çу ферминче кирлĕ таранах выльăхсем усраççĕ, анчах Антонова юлташ киличчен выльăхсене пăхасси тата вĕсен продуктивлăхĕ те ăпăхрах пулнă. Халĕ Антонова юлташ кулленех фермăра пулать, унта ĕçлекен колхозниксене выльăхсене пăхмалли çинчен вĕрентет. Фермăра ĕçлекен колхозниксем умне кашни сăвакан ĕнерен çулталăк хушшинче 3 пин литр сĕт суса илес задача лартнă. Çакна пурнăçа кĕртме кирлĕ условисем çителĕклĕ, ăна вĕсем пурнăçа кĕртеççĕ те.

Сысна ферминче ама сыснасем 22 пуç усраççĕ. Кăçал çĕнĕрен вите тума йышăннă, халĕ йывăç турттараççĕ.

Колхоз ВКП(б) XVIII конференцийĕ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăй çине илнĕ обязательствăна пĕтĕмĕшпех пурнăçа кĕртрĕ.

Н. Яснопольский.

САМРĂК УЧИТЕЛЬСЕНЕ ПУЛĂШМА

Географи урокĕсенче практикăллă хăнăхусем парасси

Пирĕн республикăра пултарулла та чапла, нумай çул хушши географи вĕрентекен учительсем сахал мар. Çапла пулин те, чапла опытсем çинчен канашлусенче те, пичетре те çутатса паракансем çук теме те юрать. «Хам пĕлсен çитет, сынсем хăйсем пĕлме тăрăшчăр»,—тенĕ пекех туйăнать. Ырă вăрлăха нихăçан та акмасăр хăвармаççĕ, çавăн пекех опыта та çамрăк учительсем хушшине сармалла. Паха опытсене пур учительсен тивĕçлĕхĕ тумалла. Çапла тусассăн тин эпир географи вĕрентес ĕçе тивĕçлĕ вырăна лартăпăр.

* * *

Географи, ытти предметсем пекех, пурнăçра питĕ кирлĕ предмет; географи урокĕсенче вĕренекенсене практикăллă хăнăхусем нумай пама пулать. Географи вĕрентес ĕçе тĕрĕс йĕркеленĕ шкулсенче ачасем пурнăçра кирлĕ хăнăхусемпе çителĕклĕ таран паллашаççĕ, вĕсем çав предмета юратса вĕренеççĕ.

Хăшпĕр учительсем географи урокĕсене вулав урокĕ майлă ирттереççĕ, карттăсемпе сахал усă кураççĕ. Çавăнпа та вара ачасем географирен ютшăнма пăхаççĕ. Эпĕ çапла каласшăн: кам карттăна ăнланса вуламасть, çав географине пĕлмест; кам географине пĕлмест, çав хаçат-журналсене, кĕнекесене тĕплĕн ăнланса вулама пултараймасть.

Пирĕн хамăран та, ачасен те çĕр чăмăрĕ çинчен, ун çинчи пурнăçа, явленисене тĕплĕрех пĕлмелле (сăлтавĕсене, сыхăнăвĕсене). Ачасене кĕнеке вуланă чухне хăйсен умне географи картти сарса хума хăнăхтармалла. Вĕсем унпала яланах усă курччăр, географи терминĕсене ăнланса, пурне те тупсах пыччăр. (Тайга çинчен вуланă чухне—тайгара, пушхир çинчен вуланă чухне—пушхирте, Египет çинчен вуланă чухне—Египетра, Австрали çинчен вуланă чухне—Австралире сӳренĕ пек туйччăр вĕсем).

Кунсăр пуçне градус сеткипе анлăн усă курмалла. Кĕнеке çинче кăтартнă вырăн хăш долготара, хăш широтара, хамăр пурăнакан вырăнтан (Чăваш республикинчен) хăш енче, инçипе сывăххине (миçе километрне) пĕлсе вуламалла. Кашни ачанах сантиметр çине пайланă линейка пулмалла.

Иртнĕ çулсенче нумай шкулсенче географи карттисене вăхăтлăха (уроксенче) анчах çакатчĕç, урок пĕтсенех вара вĕсене васкаса пуçтарса хуратчĕç. Кăçалхи çул та çапла тăвакан учительсем тупăнаççĕ. Çапла тунă ачасене пысăк чăрмав кӳрет. Эпĕ хамăран шкулта ачасене карттăсемпе яланах анлăн усă курма ирĕк паратăп. Манăн ачасем уроксем пусланиччен те, урокченче те, уроксем хыççăн та карттăсем умне тăрса, вĕсене вулама хăнăхаççĕ, отличниксемпе ударниксем сахалрах пĕлекен юлташĕсене пулăшу параççĕ. Ку пĕчĕк ĕç пек, анчах пĕчĕкрен, юлашкинчен, пысăк ĕç пулса тăрать.

Ачасем хăмĕ-пĕри масштаба часах ăнланса çитеймеççĕ, çавăнпа та вара карттăсем çине ăнланмасăр пăхаççĕ. (Ачасем кăна мар, учительсенчен те хисеплĕ масштаба тарăн ăнланса илменнисем тĕл пулкалаççĕ).

Масштаб çинчен физикăллă географи анчах вĕрентет пулсан та ун çинчен 6-мĕшпе 7-мĕш классенче те асăрхаттарсах тăмалла, кашни çĕнĕ карттă çинчи масштаба вулаттарса ăнлантармалла. Хисеплĕ масштабран лини масштабĕ, лини масштабĕнчен хисеплĕ масштаб тума хăнăхтарсах тăмалла. Çак ĕçе тумашкăн вăхăт нумай иртмест, анчах усси нумай вара. Ачасем масштаба яланлăхах ăнланса юласçĕ.

Тĕнче енĕсене пĕлме, пĕр иккĕленмесĕр кăтартма хăнăхтарасси те шкулта пысăк вырăн йышăнать. Ку тĕлĕшпе пысăк переменăсенче вăйăсем ирттермелле, компаспа усă курса, хушнă енне-лле утма хăнăхтармалла.

Тата япаласен вырăнне пĕчĕклетсе ӳкерни (план) те ачасене интереслентерет, çав вăхăтрах вăл кирлĕ те. Çак ĕçе пĕчĕкрен пуçласа, майĕпен сарса, пысăклатса пымалла, класри сĕтел вырăнĕнчен пуçласа колхоз хирĕн лаптăкĕ патне çитмелле. Эпĕ хам сĕтел, класс, шкул, шкул пахчи, ачасен килĕнчи çурт вырăнĕ, колхоз карташĕ, ял, колхоз хирĕн лаптăкĕсене масштаб тăрăх ӳкерсе илме майĕпех хăнăхтаратăп. (Колхоз хирне ӳкернĕ чухне хатĕр планпа та усă курма юрать). Ку ĕç çăмăл мар, анчах питех те кирлĕ ĕç.

Куçвиçипе ӳкерсе илесси те (глазомерная съемка) шкулсенче пысăк вырăн йышăнать, йышăнмалла та. Ачасем пĕрре-иккĕ катартса панипех çак ĕçе тума хăнăхса çитеймеççĕ. Ку ĕçе темиçе хут туса ирттерсен аван пулать. Программа тăрăх вăхăт сахал панă пулсан, çуркунне тата çуллахи вăхăтра ку ĕçе уроксем хыççăн лайăх пурнăçлама пулать. Куçвиçипе ӳкерме тытăниччен кашни ачанах хăйĕн утăмĕн пысăкăшне татăклă, тĕрĕс пĕлмелле, кашни ачанах планшет тата ытти кирлĕ хатĕрсем те пулмалла.

Пирĕн нумай шкулсенче, 30—40 ачана пĕр планшет анчах пулнипе, ачасенчен нумайĕшĕ учитель мĕнле ĕçленине курма пултараймаççĕ, ăнланмасăр юлаççĕ. Çавăн пирки вара чылай ачасемшĕн куçвиçипе ӳкерме вĕрентекен урок кану урокĕ пулса тăрать. Планшет хăмисем çителĕклĕ пулсан та, компас çителĕксĕрри чăрмантарать. Компас хаклă япала мар, ăна пур шкулăн та кирлĕ тараватăп. Урокра пĕрле ĕçленисĕр пуçне учителĕн ачасене заданисем памалла, ĕçе хăнăхтармалла. Пĕр виçмесĕр, метр патаккине тытмасăр, унпа усă курмасăр тĕрĕс ӳкерсе илни ачасене анчах мар, çитĕннисене те интереслентерет. Куçвиçипе ӳкерессине тата топографи кружокĕнче ирттерме пулать.

Ачасене пĕчĕкреннех çар ĕçне вĕрентесси—пирĕн тĕллев пулса тăрать, çавăнпа та топографи карттисене ăнланса вулама вĕрентни кирлĕ. Шкулсенче топографи карттисем çителĕклĕ пулмалла.

Кĕркуннепе çуркунне шкул карташĕнче географи площадки организацилемелле. Çав площадкăра кăнтăр йĕрне палăртма пулăшакан юпа, хĕвел сехечĕ т. ыт. те пулмалла. Кашни ача вырăнти меридиана, параллеле тунма пĕлмелле.

Çĕр хуппин сийĕсемпе паллашма ачасене тарăн çырансем патне экскурсие илсе каймалла, çывăхри сăртсен çӳллĕшне виçме хăнăхтармалла.

Вырăнти тĕрлĕ почвăсен коллекцине ачасен вăйĕпе пухсассăн питĕ лайăх пулать. Ку ĕçе тума нименле йывăрлăх та çук, ачасен пуçарулăхне майласа ярасси кăна кирлĕ.

Çанталăка сăнасси пур классенче те йĕркеллĕ иртсе пымалла. Метеорологи станцийĕ çывăхра пулсассăн, унпала тачă сыхăну тытмалла, пулăшу илмелле, пулăшу памалла. Çак ĕçрех вырăнти признăксемпе усă курни те пысăк пулăшу парать.

Çĕр пичĕн формисене ăнлантарасси те çăмăлах мар. Çак ĕçе çăмăллатас тĕллĕшпе пĕр ещĕк хăйăр нумай пулăшу парать. Ачасене хăйсене айлăм, тӳрем сăрт, ту тăрăхĕ т. ыт. те тума хăнăхтарас пулать.

6-мĕшпе 7-мĕш классенче, вĕренсе пынă май, тĕнче пайĕсен, государствăсен, крайсен, облаççен карттисене тутарсах пымалла, карттăсене тĕрĕс тутарассишĕн тăрăшмалла. (Ача-пăча хăйĕн аллипе тунă япалана нихăçан та манмасть).

Карттăна лайăх вулама хăнăхтарас, вĕреннĕ материала манмалла мар тăвас шухăшпа, кашни урокрах тенĕ пек, карттă тăрăх «çул çӳремешкĕн» пăртак вăхăт уйăрмалла. Çак япала раснах вĕренӳ çулĕн юлашки чĕрĕкĕнче, повторени урокĕсенче, питĕ хаклă тата кирлĕ. Çапла тусассăн ачасем çирĕп, пуçран тухман пĕлӳ илеççĕ. Карттă тăрăх «çул çӳренĕ» вăхăтра пурте: çырми, тинĕсĕ, хулли, тăвĕ, кӳлли, халăхĕ, государстви, облаçĕ, заливĕ, проливĕ, климачĕ, ӳсен-тăранĕ, чĕрчунĕ т. ыт. те тĕл пулса, ачасен пуçĕсенче çĕнелеççĕ.

Географи урокĕсенче тата ачасене тĕне хирĕçле воспитани парасси çинчен манма юрамасть. Ку ĕçе тумашкăн çавтери лайăх меслетсем пур.

Тĕрлĕ çĕршывсен, государствăсен çĕр лаптăкĕсен пысăккăшне катартмалла, ăнлантармалла пулсан, пĕтĕм Совет Союзĕн е Чăваш республикин лаптăкĕпе танлаптарсан аван пулать. Çапла тусассăн ачасем пĕр çĕршывпа тепĕр çĕршывăн лаптăкĕсен хушшинчи уйăрмăха чăсрах, çăмăлтарах, çирĕпрех ăнланаççĕ.

Контурлă карттăсем пысăк усă панине пурте пĕлеççĕ, вĕсемпе ытларах усă курма тăрăшмалла.

Географи урокĕсенче практикăллă хăнăхусем тата нумай пама пулать. Вăл ĕнтĕ кашни учитель хăйĕн ĕçне пĕлсе тата юратса туса пынинчен килет.

Ипатий МАРКОВ.

РСФСР шкулĕн тава тивĕçлĕ учителĕ.



Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс Çар Флочĕ XXIII çул тултарнă ятпа февралĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарта военизированнăй мото-кросс пулса иртрĕ. Кросра колхоз техникумĕн преподавателĕ М. Д. Аникин юлташ (12-мĕш №-лĕ машинăпа) мала тухнă.

К. Бабаев фото-ӳкерчĕкĕ.

Çутĕç работникĕсен районри канашлăвĕ

ЕТĔРНЕ. Çак кунсенче çутĕç работникĕсен районри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу çутĕç работникĕсен республикăри канашлăвĕн итогĕсем çинчен, районра халăха вĕрентес ĕçе лайăхлатмалли мероприятисем тата политпросвет ĕçĕ районра мĕнле тăнипе çитĕннисем хушшинче хутпĕлменлĕхе, çавăн пекех хутла сахал пĕлнине пĕтересси çинчен докладсем итлесе сӳтсе-яврĕ.

Юлашки вăхăтра Етĕрне районĕнче халăха вĕрентес ĕçре чылай çитĕнӳсем тунă. Учительсем хушшинчи ĕç дисциплини çирĕпленнĕ, шкулсем тата учительсем план тăрăх ĕçлеме тытăннă, учительсем хушшинче ăмăрту ăнлăн сарăлнă. Программа материалĕсене вĕрентнĕ май ачасене практикăллă хăнăхусем парас тĕллĕпе те хăшпĕр çитĕнӳсем пур. Шкул ачисем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси чылай малалла кайрĕ.

Анчах та районра халăха вĕрентес ĕçре çитменлĕхсем те нумай-ха. Етĕрне районĕ халăха вĕрентес ĕç тĕллĕпе республикăра кайри вырăнта тăрать. Районри шкулсенче вĕренӳре ĕлкĕрсе пыракансен хисепĕ 79,8 процент кăна. Хăшпĕр шкулсенче вĕренӳ пахалăхĕшĕн тăрăшни çук. Сăмахран, Палтайри вăтам шкулăн пĕр класĕнче вĕренекенсем пурте «плохо» паллă илнĕ. Ку питех те пăшăрхантаракан факт.

Районра шкул çулне çитнĕ 25 ача шкула çӳремеççĕ. Ирсери пуçламăш шкул 12 ачана вĕренĕве явăçтарман.

Шкул ачисем вĕренӳре ĕлкĕрсе пырасси, чи малтан, учительсенчен килет. Учительсен урока хатĕрленмесĕр пырас йăлана пĕтерес пулать. Анчах хăшпĕр учительсем, сăмахран, Градовская, Семенова, Соловьева юлташсем, урок планĕсене тумасăр класа пыраççĕ. Директорсемпе шкул заведующийĕсем учительсен ĕçне тĕрĕслемеççĕ.

Ку çеç те мар-ха. Палтайри вăтам шкулта çак вĕренӳ çулĕн иккĕмĕш çурçулĕнче ĕçлемелли плана паян кунччене туман. Шкулсенче физкультурăпа оборона ĕçне япăх йĕркеленĕ. Хăшпĕр шкулсенче физкультура урокĕсене ытти уроксемпе улăштарнисем те пулнă.

Политпросвет учрежденисен — клубсен, вулав çурчĕсен — ялти политикăллă-массăллă ĕçсен центрĕсем пулса тăмалла. Районри политпросвет учрежденисенчен хăшĕ-пĕрисем чăннипех кăтартуллă ĕçлеççĕ. Сăмахран, Кăташри тата Етĕрнекассинчи вулав çурчĕсем аван ĕçлесе пыраççĕ.

Кунти вулав çурчĕсенче партипе правительство постановленисене халăха ăнлантарса парассине, физкультурăпа оборона ĕçне, тĕне хирĕç кĕрешессине, спектакльсем, вечерсем ирттересснне, кружоксен ĕçĕсене аван йĕркеленĕ.

Анчах япăх ĕçлекен вулав çурчĕсем нумай-ха. Тĕслĕхрен, Урапакассинчи вулав çурчĕ (избач Семенов) нимĕнле политикăллă-массăллă ĕç те тумасть.

Çитĕннисене вĕрентесси районра япăх пырать. Паянхи куна районĕпе 368 çын хутла сахал пĕлекенсем, хутла пĕлменнисем 170 çын шутланаççĕ. Вĕсенчен 65 процентне кăна вĕренĕве явăçтарнă.

Канашлура тухса каланă юлташсем халăха вĕрентес ĕçре тата политпросвет учрежденисен ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклерĕç тата çитменлĕхсене тĕрме сĕнӳсем пачĕç.

Канашлу асăннă çитменлĕхсене пĕтерме решени йышăнчĕ.

И. ТИМОНИН.

Ф. П. Павлов вилнĕренпе 10 çул тултарас умĕн

Чăвашсен чи талантлă композиторĕ тата паллă драматургĕ Федор Павлович Павлов вилнĕренпе кăçал июнĕн 2-мĕшĕнче 10 çул çитет.

Ф. П. Павлов пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен аса илнĕ май, эпир унăн пĕтĕм творчествине хисепе илмелле.

Чăваш АССР Государство Издательстви кăçал Ф. П. Павловăн литературăллă произведенийĕсен сборникне пичетлесе кăларма хатĕрленет. Сборнике «Судра», «Ялта» пьесăсемсĕр пуçне Ф. П. Павловăн хăшпĕр куллăмла калавĕсем, сăввисем кĕмелле. Ф. П. Павловăн музыка çинчен çырнă статьисене, критикăллă статьисене т. ыттисене те пухса журналсенче пичетлесе кăлармалла.

Вăл илемлетнĕ юрăсемпе хăй çырнă юррисене тата ытти произведенийĕсене пухса Чăвашиздат сборник кăларать.

Ф. П. Павловăн çырса пĕтермен произведенийĕсем тата тĕрлĕ рукописĕсем чылай. Вăл тĕрлĕ çулсенче тĕрлĕ вырăнта çырса илнĕ халăх юррисем нумай. Тивĕçлĕ организацисен Ф. П. Павловăн мĕнпур рукописĕсене пухас ĕçе халех тытăнмалла.

Н. В.

Заочник-учительсен ăмăртăвĕ

Улатăр хулинчи тата Улатăр районĕнчи заочник-учительсем, Пединститутра вĕренекенсем, Шупашкар хулинчипе Шупашкар районĕнчи заочник-учительсене социализмлă ăмăртăва чĕнĕ.

Ăмăртăва хутшăннă заочник-учительсем çуллахи зачет сессине тĕплĕн хатĕрленме, пурте зачет сессине пыма, контрольнăй ĕçсене лайăх хатĕрлеме, пурте аслăрах курса куçма, юлашки çул вĕренекенсем пурте вĕренсе тухма пулнă.

Заочник-учительсен ăмăртăвĕ ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ ячĕпе пуçланнă.

Чăнлăх куçран чикет

Районри хаçатра «Пĕр вĕреннипе» ятлă заметка пичетленсе тухнă. Вăл заметкăра икĕ тĕслĕх илсе кăтартнă. Малтанхи тĕслĕхĕ — дежурнăй лавкари Яндуванов продавец, иккĕмĕш тĕслĕхĕ — районри прокурор помощникĕ Мишуткина çинчен пырать. Яндуванов «пĕр вĕреннипе» яланах тавар илекенсен ыйтăвĕсем çине «грубо ответлет». Мишуткина та, Яндуванов пекех, «хăйне мăнна хуракан çын». Çынсемпе «питĕ грубо калаçать».

Заметкăри фактсене тĕрĕс тата вĕсене ĕненмелле кăтартса панă. Имĕнле майпа та унăн çумне «пырса çыпăçăнмалла мар» пек, «Вăл çаплах пултăр, анчах апла çынна кулма паратпăр-и!» Мишуткина заметка тăрăх «опровержени» çырать. Опровержение тимĕр пек çирĕп чĕлхепе «по следующим обстоятельствам» çапла каланă:

«Во время занятия... к нам не звоните. Я, как руководительница учреждения (вр. и. о. прокурора) обязана... призвать к порядку. Вызов по телефону... является нарушением Указа Президиума Верховного Совета СССР от 26/VI—40 г. Было очень много случаев, что из редакции к нам во время занятий каждый день... звонили. Если эти вызовы по служебным делам, то нужно делать через прокурора.

На основании вышеизложенного... статью «Пĕр вĕреннипе» в отношении меня опровергать.

Пом. прокурора (ала пуснă)».

Призвать к порядку?! Кама? Мĕншĕн? Камсем питĕ ашкăнса кайнă?

Прокурор помощникĕ Мишуткина алăкран кĕрсенех редакци секретарĕ ларакан сĕтел умне чăмса пынă.

— Тахăшĕ сирĕн хăвăр хаçатра манăн çинчен болтать тунă. Вăл заметкăçăр пуçне урăх нимĕн çинчен те çурмалли тупаймарăр пулмалла.

Редакци секретарĕ большевикла пичетре нихăçан та болтать туманни çинчен калама тăнă, вăл ăна хăлхана чикмесĕрех карусель евĕрлĕ çавăрăнса, алăкран васкавлăн тухса кайнă. «Апла иккен, унăн асăнтарăпăр вĕсене, хамăр алла илĕпĕр ак»,

Кама алла илнĕ хыпăр вăл, — пĕлместпĕр. Пирĕн патăрта урăх хыпар пур. Ку заметка пирки вăл ВКП(б) райкомне жалоба панă: «Вĕсем пирĕн çинчен хаçатра çыраççĕ. Авторитет сухалать. Ун пек эпĕ малалла ĕçлеме пултараймастăп», — тенĕ. ВКП(б) райкомĕ вăл жалобăна ВЛКСМ райкомне панă. ВЛКСМ райкомĕ ăна хăйĕн бюровĕнче пăхса тухнă.

Чăнлăх куçран чикет, тесе ахальрен каламан çав. ВЛКСМ райкомĕ хăйĕн бюровĕнче «Пĕр вĕреннипе» ятлă заметкăра кăтартнă пек унăн ĕçĕнчи ытти тивĕçсĕрлĕхĕсене тепĕр хут кăтартса хăварнă.

Вăл, Мишуткина, районри прокурор помощникĕ. Мĕнле-ха хаçатра ăна критиклеме тата унăн çăлтмĕнлĕхĕсене кăтартса пама хăюллăх çитереççĕ? Беда, кунта ĕнтĕ, унăн ытти вырăнсенче ĕç тухмарĕ пулсан, заметка авторне «алла илесси» юлать. Мĕнле вăл ăна «алла илме» шухăшлать, — пĕлместпĕр, анчах районри прокуратурăна вăл «на всякий случай» ура çине тăратнă, тесе каласаççĕ.

Ку — пĕрре. Тепре каллех куçа чикекен урăх чăнлăх çинчен сăмах пуçлатпăр. Кунта та ĕнтĕ çав райхаçатах айăпла тухать пек. «Хăçан ăна уйрăм çынсене тата организацисене критиклеме чарас? Суда паратпăр, тесе каласа хăратсан анчах»...

Хаçатра райлесзаг хĕллехи вăхăт валли вутă çителĕксĕр кӳрсе килнине, районри чылай учрежденисемпе организацисем вутăсăр ларнине кăтартса панă. «Мĕнле çак? Кам ун пек каларĕ?»

Райлесзаг директорĕ Залогин «опровержени» çырать:

«Райлесзаг учрежденисене вутă турттарса килсе пама пултараймасть. мĕншĕн тесен райлесзагăн собственнăй обоз çук. Çуллахи вăхăтра пĕтĕмпе 271,5 кубла метр вутă турттарса панă. Райлесзагăн вутă çук, тесе карьерле çырнине шутласа тата суйса хаçат урлă намăслантарнăшăн суд урлă тĕрĕслĕхне шыраса тупăп».

Акă ĕнтĕ хăвна валли ху инкек шыратăн. Вутă пур пулсан хут ăна, çунтар, çук-тăк — ан шарла, хуп çăварна, шăлна çырт, ахаллĕн суда лекетĕн!..

Ку «опровержени» копине Залогин ВКП(б) райкомне панă. Ун çине ВКП(б) райкомĕнче çакнашкал резолюци хунă: «Заметка тĕрĕс. Залогина хăвăртрах вутă турттарса çитерме хушас»—тенĕ.

Çапла çав. Аптрие михĕре пытарма çук. Çавăнпа пулĕ-и тен Элĕкри «Колхоз хаçачĕ» хаçат юлашки вăхăтра районри «пысăкрах» çынсене тата уйрăм организацисене критиклеме пăрахрĕ. «Темрен тем пулать, тен пире «алла илеççĕ, тен суда лекетпĕр», тесе шикленеççĕ пулĕ çав вĕсем тен. Хăратса çитĕрнĕ ĕнтĕ.

ИВ. МОСЕЕВ.

Шкулсенчи çуркуннехи каникулсем

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕ шкулсенче çуркуннехи каникулсем ирттермелли вăхăта палăртса панă. Хуласенчи тата фабрикăпа завод поселокĕсенчи шкулсенче вĕренекенсем мартăн 24—30-мĕш кунĕсенче канаççĕ. Ялти шкулсенче ачасене каникула ямалли вăхăта (каникул вăхăчĕ 6 кун) райсовет исполкомĕсем хăйсен районĕнчи климат условийĕсене кура, мартăн 24-мĕшпе апрелĕн 24-мĕш хушшинче, палăртса параççĕ.

Професcор лекцийĕ

СЕНТĔР. Çак кунсенче колхозсенчи ферма заведующисемпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен колхозниксем валли лекци ирттерчĕç. Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн профессорĕ Пельщих юлташ выльăх-чĕрлĕхсене тăрантарса пăхса усрасси çинчен лекци вуласа пачĕ. Лекцине итлеме 200 çына яхăн пухăннă.

С. Налимов.

Таварçавăрнăш планне ăнăçлăн тултарать

ВĂРМАР. Муссирмари сельпо (правлени председателĕ Самсонов юлташ) юлашки вăхăтра хăйĕн ĕçне лайăхлатрĕ. Пĕрремĕш кварталти таварçавăрнăш планне çурри ытла тултарнă. Февралĕн 10-мĕш тĕлне 131 пин тенкĕлĕх товар сутнă, заготовкăсен планне 66 процент тултарнă, кооператив тленне илес тата пай укçи пухас тĕлĕшпе плана 115 процент пурнăçланă.

Сарро.

Тĕрĕсленсе килнĕ материалсем тăрăх

„Указа пăсакансемпе хаярăн кĕрешмелле“

Йĕпреçри межрайбазăра малтан директор, унтан директор заместителĕ пулса ĕçленĕ Быстрецкий растрата тунăшăн судпа айăпланнă çынсене ĕçе илнĕ, работниксен ĕçне контроль туса пыман. Çавăнпа та базăра хуçасăрлăх пуçпулса тăнă, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ 1940 çулти июлĕн 10-мĕшĕнче кăларнă Указа пăснă т. ыт. Çаксем çинчен редакцине çырса пĕлтерчĕç. Редакци вăл материала тĕрĕслеме ячĕ.

Чăваш АССР прокуратури: материалта асăннă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс, Чăваштпотребсоюз президиумĕ йышăннă тăрăх, Быстрецкине ĕçрен кăларнă, база директорне Мохова асăрхаттарнă, тесе пĕлтерчĕ.

Çавăн пекех, прокуратура енĕпе Йĕпреç районĕнчи прокурора фактсене тĕплĕн тĕрĕслесе анăплисене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарма хушнă.

Çĕрйĕркелекенсен кадрĕсем

СЕНТĔРВАРРИ. Çĕрйĕркелӳпе мелиораци техникумĕ çумĕнче съемщик-çĕрйĕркелекенсем хатĕрлекен 8 уйăхлăх курс уçăлнă. Курсра 28 çын вĕренет.

Курсран вĕренсе тухсан съемщиксем колхозсенчи пусуçавăрнăшне йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеме каяççĕ.

И. Казамбаев.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ЧЕБОКСАРСКОЙ МЕЖРАЙБАЗЕ ЧУВАШПОТРЕБСОЮЗА
СРОЧНО ТРЕБУЮТСЯ
СКЛАДСКИЕ РАБОЧИЕ
Она же сдает подряд НА ВЫГРУЗКУ и ВЫВОЗКУ соли из баржи.
С предложением обращаться: гор. Чебоксары, ЧАССР, ул. Карла Маркса, д. 3, 2-й этаж, ком. 4.
Дирекция.
3—2

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

артели „Перламутр“ системы Чувашпромсоюза на 1 января 1941 г. (в. тыс. руб.)

АКТИВ	Сумма на 1-ое января 1940 г.	Сумма на 1-ое января 1941 г.	ПАССИВ	Сумма на 1-ое января 1940 г.	Сумма на 1-ое января 1941 г.
Основные средства	138,3	139,6	Фонды и резервы	59,3	93,8
Расходы за счет будущих периодов	3,9	2,9	Долгосрочные кред.	80,3	140,1
Отвлеченные средства	74,6	160,9	Краткосрочные кредиты Госбанка	62,5	11,7
Предметы, не относимые к основным средствам	21,6	30,4	Расчеты (кредиторы)	46,9	83,0
Сырье, материалы и топливо	48,5	80,4	Прибыли	177,6	185,2
Незавершенное производство	7,1	1,9			
Готовая продукция и товары	74,5	51,6			
Товары отгруж. и вып. работы	11,2	27,5			
Денежные средства	46,4	2,7			
Расчеты (дебиторы)	1,1	10,4			
Междубалансовые расчеты	—	6,4			
БАЛАНС	427,2	513,8	БАЛАНС	427,2	513,8

Счет прибылей и убытков (в тыс. руб.)

Расходы и убытки	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.	Доходы и прибыли	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.
Убытки от реализации	—	—	Доходы от реализации	175,3	187,3
Расходы и убытки разные	0,7	2,1	Доходы разные	3,0	—
ИТОГО	0,7	2,1	ИТОГО	178,3	187,3
Прибыль отчетного года	177,6	185,2	Убытки отчетного года	—	—
БАЛАНС	178,3	187,3	БАЛАНС	178,3	187,3

Председатель правления **Кузнецов М. Н.**
Главный бухгалтер **Михайлов.**
Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашпромсоюза 8 февраля 1941 г.
Председатель балансовой комиссии **Шишкин М. С.**
Секретарь **Яковлев Д. Я.**

ЗАКЛЮЧИТЕЛЬНЫЙ БАЛАНС

Старо-Урмарской артели „Универсал“ системы Чувашпромсоюза на 1 января 1941 года

(В ТЫСЯЧ. РУБ.)

АКТИВ	На 1 января 1940 г.	На 1 января 1941 г.	ПАССИВ	На 1 января 1940 г.	На 1 января 1941 г.
Основные средства	26,3	59,4	Фонды и резервы	58,1	75,7
Расходы за счет будущих периодов	—	0,8	Долгосрочные кредиты	22,7	55,8
Отвлеченные средства	34,4	16,0			
Убытки отчетного года	—	17,7	Краткосрочные кредиты Госбанка	16,4	19,3
Предметы, не относимые к основным средствам	5,4	5,8	Расчеты	33,2	24,2
Сырье, материалы и топливо	50,2	45,3	Прибыль	44,7	—
Тара и запасные части	1,0	2,5			
Производство	4,3	5,2			
Готовая продукция и тов.	32,0	13,2			
Денежные средства	0,1	6,2			
Расчеты	20,8	3,1			
БАЛАНС	175,1	175,0	БАЛАНС	175,1	175,0

Результат хозяйственной деятельности

Расходы и убытки	На 1/I 40 г.	На 1/I 41 г.	Доходы и прибыли	На 1/I 40 г.	На 1 I 41 г.
От реализации продукции своего производства	21,0	38,2	От реализации продукции своего производства	67,9	26,4
Расходы и убытки разные	2.2	8,0	Доходы разные	—	2.1
Прибыль	44,7	—	Убытки отчетного года	—	17,7
БАЛАНС	67,9	46,2	БАЛАНС	67,9	46,2

Председатель правления **Якимов**
Главный бухгалтер **Петров.**
Настоящий баланс рассмотрен и утвержден балансовой комиссией Чувашпромсоюза от 31 января 41 года, протокол № 22.
Председатель балансовой комиссии Чувашпромсоюза **Шишкин.**

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати. Телефонсем: редакторăн—0—67, редактор заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн—0—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн —2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство заведующийĕн—5—38, конторăн—0—23.

НТ 2586.

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии Чувашской АССР. Заказ № 146. Ф. Б. 58×84 п. л.